24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрле шăр!

1941
АПРЕЛЬ
24
КĔÇНЕРНИКУН
96 (5811) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Шкулсемпе сывлăха сыхлав учрежденийĕсен строительстви

Большевиксен партийĕ тата совет правительстви халăха вĕрентес, çавăн пекех халăх сывлăхне сыхлас ĕçе пысăккăн хакласçĕ. Правительство халăха вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе çулсеренех темиçе çĕршер миллион тенкĕ расходлать. Халĕ пирĕн шкулсенче ачасене ăнăçлăн вĕрентме, çавнашкалах халăх сывлăхне сыхлама условисем çителĕклĕ.

Партин XVIII съезчĕ пирĕн социализмлă çĕршыв умне пысăк задача лартрĕ—виççĕмĕш пятилеткăра хуласенче пурне те вунă çул, ялсенче—çичĕ çул вĕрентессине пурнăçа кĕртмелле. Пирĕн умра халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе те пысăк задачăсем тăраççĕ. Çавна май пирĕн республикăри районсенче, çавнашкалах ялсенче шкулсемпе халăх сывлăхне сыхлав учрежденийĕсем çулран-çул ӳссе пыраççĕ.

Партипе правительство шкулсемшĕн тата сывлăха сыхлав учрежденийĕсемшĕн куллен тĕрăшнине пула, пирĕн шкулсем тата сывлăха сыхлав учрежденийĕсем хăйсен ĕçĕсене чылаях лайăхлатрĕç. Республикăри нумай шкулсем вĕренĕве колхоз пурнăçĕпе, колхозри йĕркесемпе çыхăнтарса пыма пуçларĕç, сывлăха сыхлав учрежденийĕсем те халăхпа таччăн çыхăнса ĕçлеме, ĕççыннисем ыйтнине вăхăтра тивĕçтерме тата ĕççыннисен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме тытăнчĕç.

Апрелĕн 14—16-мĕшсенче Чăваш АССР Верховный Совечĕн пилĕкмĕш Сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси республикăн 1941 çулти бюджетне çирĕплетрĕ. Государство бюджечĕ тăрăх 1941 çулта халăха вĕрентес ĕç валли 77.669,1 пин тенкĕ пăхнă е вăл бюджет суммин 47 процентĕ ытларах пулать. Çак шутран пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсене тытса тăма 45.891 пин тенкĕ пама палăртнă.

1941 çулта сывлăха сыхлас ĕçре 29.765,6 пин тенкĕ расход тума йышăннă. Çакă вăл 1940 çулта расходланинчен 30 процента яхăн нумайрах шутланать. Сывлăха сыхлас ĕçре пулакан расходсем çакăн пек ӳсни сыватакан учрежденисен тата хуласемпе ялсенчи больницăсенчи койкăсен хисепĕ ӳсниничен тухса тăнă.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн пилĕкмĕш Сессинче депутатсем Наркомздрав тата Наркомпрос ĕçĕсене тивĕçлипе критиклерĕç. Депутатсем Наркомпрос тата Наркомздрав хăйсен вырăнти органĕсене, çавнашкалах сывлăха сыхлав учрежденийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине, шкул çурчĕсемпе сывлăха сыхлав учрежденийĕсен çурчĕсене темиçешер çул хушши туни çинчен яр-уççăн кăтартса пачĕç.

Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕн хăйсен ведомствине кĕрекен учрежденисенче хăвăртрах йĕркелĕх туса хурас пулать, вĕсенче государство укçитенкине хуçалла, ăста кирлĕ çавăнта тата ĕçе пысăкрах усă кӳрсе расходламалла тăвас пулать, тесе кăтартса пачĕç депутатсем.

Наркомпрос тата райсовет исполкомĕсем çителĕксĕр ертсе пынине пула хăшпĕр районсенче хуласемпе ялсенчи шкулсен строительстви пачах çителĕксĕр пулса пырать. Сăмахран, Калинински районри Чăрăш Хирлепри шкула 1938 çултанпа, Красноармейски районĕнчи Упи ялĕнчи шкула 1937 çултанпа тăваççĕ.

Иртнĕ çулта туса çитереймен ултă шкул строительстви 1941 çула куçнă. Çак шкулсен строительстви халĕ те япăх пырать. Октябрьскри шкул çуртне пĕлтĕрех тума тытăннă, иртнĕ çулта унăн никĕсне хывнă та лăпланса ларнă.

Советски район центрĕнчи шкул çурчĕн строительстви те питĕ вăраххăн пулса пырать. Иккĕмĕш хутне туса çитермелле, 7 кăмака тумалла. Анчах райсовет исполкомĕ тата Наркомпрос строительствăна япăх ертсе пыраççĕ. Кирпĕчсем, стройматериалсем çук пирки ĕç чарăнса ларнă.

Комсомольскри, Калининăри шкулсенче кăмакасем тумалла, анчах кирпĕч тата ытти материалсем çук пирки ĕçе тытăнаймаççĕ.

Кусемсĕр пуçне 1941 çулта виçĕ шкул: Çĕмĕрле районĕнчи Аслă Улхашра 280 ача, Шăмăршă районĕнчи Чепкас Никольскра 160 ача, Атăл лешъенче, ачасен çуртĕнче 160 ача вырнаçмаллăх çĕнĕрен шкул çурчĕсем лартмалла. Асăннă шкулсен строительствисем валли пурĕ 1.584 пин тенкĕ пăхнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, шкулсен çурчĕсем августăн 10-мĕшне хатĕр пулмалла. Апла пулсан та, çĕнĕрен тăвакан шкулсен строительстви вăраххăн сарăлса пырать. Халĕ строительство ĕçĕ хĕрсе пымалла. Анчах шкул строительстви валли стройматериалсем хатĕрлеме çеç тытăннă. Çĕнĕ шкулсен строительствине Наркомпрос та, райсовет исполкомĕсем те конкретлăн ертсе пымаççĕ.

1941 çулти план тăрăх 17 шкул çуртне юсамалла. Анчах çак юсама палăртнă шкулсенче нихăшинче те кирлĕ материалсем хатĕрлеме пуçăнман. Вĕренӳ çулĕ кĕçех вĕçленет. Ремонт ĕçне вĕренӳ çулĕ пĕтсенех тытăнмалла. Ку тĕлĕшпе Наркомпросăн тата райсовет исполкомĕсен татăклă улшăну тумалла: шкулсене кирлĕ пулăшу памалла.

Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн кăçалхи план тăрăх, Комсомольскра районри больница çуртне лартмалла. Кунсăр пуçне 72 объекта капитальнăй ремонт тумалла. Строительствăпа ремонт валли 1 миллион та 25 пин тенкĕ укçа пăхнă.

Калас пулать, строительство тата ремонт ĕçĕ сӳрĕк пырать. Больница çуртне тума 200 кубла метр йывăç хатĕрленисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Строительство материалĕсем çителĕксĕррине пула ĕçе тытăнмасăр тăраççĕ. Чылай çуртсене юсама тытăнмалла, анчах материалсем çитмеççĕ, Наркомздравра çанталăк ăшăтасса кĕтсе лараççĕ.

Каршлăхри ачасен санаторине майăн 1-мĕш тĕлне тата ачасен республикăри больницăн çуртне майăн 15-мĕш тĕлне юсаса çитеретпĕр,—теççĕ Наркомздравра. Çакна палăртмалла: ремонт хăвăртлăхĕ халиччен пекех пулсан, асăннă çуртсене вăхăтра юсаса çитересси çинчен шутламалли те çук.

Наркомздравра калană тăрăх, строительство валли тата çуртсене юсама материалсем халĕ хатĕрлесе çитермелле. Тĕрĕс калаççĕ. Анчах, Наркомздравăн строительство отделĕн заведующийĕ Смирнов юлташ ăста, мĕн тата мĕн чухлĕ хатĕрленине тĕплĕн каласа пама пултараймасть. Строительство материалĕсене Росснабсбыт тупса парасса кĕтсе ларать.

Пирĕн хуçалăхлă организацисемпе наркоматсем строительствăна хăвăрт, пахалăхлă тума вĕренсе çитеймен-ха. Строительство хакĕ те тивĕççĕр пысăк. Чылай стройкăсенче простойсем нумай пулаççĕ, стройматериалсемпе тĕрĕс усă курмаççĕ, ĕçшĕн тӳлес ĕçре расценкăсене пăсаççĕ, çакна пула строительство хакĕ тивĕççĕр ӳссе каять.

Шкулсемпе сывлăха сыхлав учрежденийĕсен строительствине тивĕçлипе сарса пымалла. Наркомпросăн, Наркомздравăн тата райсовет исполкомĕсен строительствăсене конкретлă ертсе пымалла. Çĕнĕ строительствăсене тата ремонт ĕçне партипе правительство кăтартса панă вăхăтра туса çитермелле.

Таджик искусстви декадин участникĕсене Кремльре йышăнни

Йышăнура И. В. Сталин, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, А. И. Микоян, А. А. Жданов, Л. П. Берия, Н. М. Шверник, Н. А. Вознесенский, А. С. Щербаков, Г. М. Маленков юлташсем пулнă

Апрелĕн 22-мĕшĕнче каçхине Кремльре таджик искусстви декадин — халĕ кăна хупăннă декадăн участникĕсене йышăннă. Çак йышăнăва Искусство ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕ организациленĕ.

19 сехет тĕлне Кремльри Пысăк дворецăн Георгиевски залĕнче Таджик СС Республикинчи искусство работникĕсем, ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем, СССР Верховный Совечĕпе РСФСР Верховный Совечĕн депутачĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмлă Ĕç Геройĕсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн высший командованийĕн представителĕсем, Сталинла премии лауреачĕсем — наукăн, техникăн, искусствăн тата литературăн паллă деятелĕсем пухăннă.

Кунта Тимошенко, Димитров, Буденный, Булганин, Вышинский, Мехлис, Первухин, Косыгин, Кузнецов, Бадаев, Лозовский, Тюленев, Протопопов, Курбанов, Шагадаев, Зверев, Ефремов, Акимов, Ярославский, Поскребышев, Поспелов, Горкин, Папанин, Молоков, Михайлов, Пронин, Попов юлташсем тата ыттисем те пур.

Георгиевски зала И. В. Сталин, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, А. И. Микоян, А. А. Жданов, Л. П. Берия, Н. М. Шверник, Н. А. Вознесенский, А. С. Щербаков, Г М. Маленков юлташсем пырса кĕрсен алă çупни аслати пек вăйлăн кĕрлесе каять.

Пурте ура çине тăраççĕ. Пухăннă çынсем Сталин юлташа тата унăн соратникĕсене темиçе минута хушши вăйлăн хавхаланса саламлаççĕ.

Искусство ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕн председателĕ М. Б. Храпченко юлташ кĕске сăмах тухса калать.

— Çак кунсенче, — тет вăл, — пирĕн çĕршыври искусство работникĕсем пысăк телей туйăмĕпе хумханса саванаççĕ. Таджик искусствин халĕ хупăннă декади çине анлă Совет общественноçĕ тимлĕн пăхса тăчĕ. Таджикистанри совет искусствин работникĕсем хăйсен чаплă мастерлăхне, таджик халăх культурин илемĕпе пуянлăхне кăтартса пачĕç.

Таджик искусствин декади вĕçленнĕ кун çĕршыври культурăллă пурнăçри тепĕр чаплă событипе—Сталинла премии лауреачĕсене дипломсем панипе пĕр кунта пулчĕ. Паян таджик искусствин декади участникĕсем тата Сталинла премии лауреачĕсем партипе правительство руководителĕсемпе пĕрле, Сталин юлташпа пĕрле Кремль Дворецне пухăнчĕç.

Партипе правительство тата аслă Сталин хăй тăрăшнипе Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен искусствипе культури гигантла вăйлă ӳссе çирĕпленсе пырать, Таджик республикин искусстви те ӳссе чечекленчĕ.

Храпченко юлташ Советлă Таджикистанри чаплă искусствăшăн, таджик искусстви декадин участникĕсемшĕн, Сталинла премии лауреачĕсемшĕн, социализмăн мĕнпур çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса пыракан çыншăн — совет искусствин аслă тусĕшĕн Сталин юлташшăн сывлăх сунса сăмах калать.

Залра Сталин юлташа чысласа оваци кĕрлеме тытăнать. Темиçе минута хушши алă çупаççĕ. Зала пухăннисем пурте юратнă çулпуçа, учителе тата туса хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Унтан Таджик ССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Мухамеджан Касымов сăмах илет.

— Çак кунсенче, — тет Касымов юлташ,—таджик халăхĕ калама çук пысăк хаваслăх туйăмĕпе савăнать. Çак хаваслăх таджик искусствин Мускаври декадин итогĕсенчен тухса тăрать.

Таджикистанри искусство работникĕсем, пирĕн тăван çĕршыв столицинчи общественность ăшă кăмăлпа йышăннипе тата партипе правительство руководителĕсем пирĕн çине пысăк тимлĕхпе пăхнипе хавхаланса çĕкленнĕ работниксем, — хăйсен ăсталăхне хăпартас тĕлĕшпе татах та ытларах çине тăрса ĕçлĕç, таджиксен нумай ĕмĕрхи культурин иксĕлми çăлкуçĕсемпе татах та лайăхрах усă курĕç, таджик халăхĕн пуян та телейлĕ пурнăçне искусствăра татах та лайăхрах кăтартса парĕç.

Хаклă Иосиф Виссарионович! Сире пĕтĕм чĕререн сывлăх, тăшмансене шик кӳрсе тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен массисене савăнăç кӳрсе татах та нумай, нумай çулсем хушши пурăнма сунатпăр.

Сталин юлташа чысласа каланă саламлă сăмахсем хаваслăн янăраса илтĕнеççĕ. «Урра» кăшкăрнă сасă зал маччисем айĕнче нумайччен кĕрлесе илтĕнет.

Таджик ССР тава тивĕçлĕ артистки Туфа Фазылова хăйĕн тăван чĕлхипе сăмах тухса калать. Вăл таджик халăхĕн культурипе искусстви ӳссе чечекленни çинчен, искусство мастерĕсем Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ Вячеслав Михайлович Молотов яланах тăрăшнипе тата пулăшса пынипе туна çитĕнӳсем çинчен калать.

Фазылова юлташ Совет правительствин юратнă руководительне Молотов юлташа чысласа сывлăх сунса сăмах калать. Зала пухăннă çынсем Сталин юлташăн çывăх соратникне — Вячеслав Михайлович Молотова хĕрӳллĕн алă çупса саламлаççĕ.

Таджик ССР тава тивĕçлĕ артистки Рена Галибова пысăк çĕкленӳпе сăмах тухса калать.

Вăл сĕнӳ панипе, залра лараксем СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне Михаил Иванович Калинина ăшшăн саламлаççĕ.

Малалла СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ В. М. Молотов юлташ сăмах илет.

— Паян эпир Советлă Таджикистанăн, апла пулсан Пĕтĕм Совет Союзĕн çĕнĕ пысăк çитĕнĕвĕсене чысласа праздник тăватпăр, — тет Молотов юлташ. — Кунта эпир çак куна хаваслăн саламласа кĕтсе илетпĕр, пирĕн чаплă çынсемпе — наука, техника, изобретательство, искусство тата литература енĕпе панă Сталинла премисен лауреачĕсемпе пĕрле кĕтсе илетпĕр. Эпир пĕлетпĕр, 1941 çулти Сталинла премии лауреачĕсем наукăна, техникăна, искусствăна тата литературăна вăйлатас ĕçре малашне мухтавлă çитĕнӳсем тума çул хывĕç.

Эпĕ Сталинла премии лауреачĕсен сывлăхĕшĕн тост çĕклетĕп. Сывă пулччăр 1941 çулти Сталинла премии лауреачĕсем!

Сталин юлташ сывлăхĕшĕн — урра!

Молотов юлташ тост каланине тăвăллă та хаваслă оваци туса саламлаççĕ. Пурте хăйсен вырăнĕсем çинчен пĕр çын пек çĕкленсе тăраççĕ. «Сывă пултăр Сталин юлташ!», «Аслă Сталина—урра!» тесе таджик тата вырăс чĕлхисемпе кăшкăрса калана саламлă сăмахсем нумай минутăсем хушши янăраса тăраççĕ. Хăватлăн кăшкăрнă «урра» сасă Георгиевски зал маччисем айĕнче нумайччен кĕрлесе тăрать.

В. М. Молотов юлташ, Сталин юлташ сăмах илет, тесе пĕлтерсен, оваци калама çук пысăк, çĕнĕ вăйпа кĕрлесе каять. Вĕçĕ-хĕррисĕр савăнăç. Зала пухăннă мĕнпур çынсен куçĕсем—Сталин юлташ çинче. Алă çупнипе кĕрлекен сасă ăна нумайччен хăйĕн сăмахне пуçлама памасть.

Сталин юлташ аслă Ленин çинчен — большевикла партине туса хунă, ирĕклĕ çĕршыври халăхсен Союзне организациленĕ, çак аслă Союза сыхласа усрама вĕрентнĕ аслă Ленин çинчен калать. Унтан Сталин юлташ таджик халăхĕн сывлăхĕпе чечекленĕвĕшĕн, унăн культурипе искусствине пур майсемпе те вăйлатса пырассишĕн тост çĕклет.

Сталин юлташăн юлашки сăмахĕсене саламласа хавхаланулла оваци тăваççĕ. Пурте пĕр çын пек пулса ура çине тăраççĕ. Алă çупни хăватлă вăйпа кĕрлет. Аслă çулпуçа, учителе тата тусăмăра — Сталин юлташа чысласа каланă саламлă сăмахсем нумай хут янăра-янăра илтĕнеççĕ.

Йышăнура пулнă хăнасем валли пысăк концерт панă.

Йышăну темиçе сехете пынă. Сталин юлташ, партипе правительство руководителĕсем йышăнура пулнă çынсемпе ăшшăн сывпуллашса уйăрăлаççĕ. Сталин юлташа тата унăн соратникĕсене чысласа çĕнĕрен пăсăк хавхаланупа оваци кĕрлесе каять. (ТАСС)

Сталинла премии лауреачĕ, виçĕ орденпа наградăланă **Джамбул Джабаев**, СССР халăх артистки орденоносец **Куляш Байсеитова** тата поэт-орденоносец **Т. Жароков** Казах ССР Верховный Совечĕн IV-мĕш сессийĕн ларăвĕнче. Д. Саланов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Уяв ячĕпе туна çитĕнӳсем

КАНАШ, апрелĕн 23-мĕш. (**Хамăр корр., телефон тăрăх**). Вагонсем юсакан заводри вагонсем юсакан цехри комсомолец А. Чернухин юлташ ертсе пыракан столярсен группи (группăра 4 çын), Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, уйăх планне апрелĕн 28-мĕшĕнче тултарма пулнăччĕ. Вăл хăйĕн обязательствине пилĕк кун малтан, апрелĕн 23-мĕшĕнче, ирттерсе тултарчĕ. Апрель уйăхĕнче пурĕ 19 вагон юсамалла пулнă, вĕсем 21 вагон юсаса кăларнă. Уйăх пĕтиччен вĕсем татах 6—7 вагон юсама пултараççĕ.

Çак цехри Шершунков юлташ ертсе пыракан коллектив уйăх планне апрелĕн 25-мĕшне тултарса çитерет.

М. ТИТОВ.

Ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ

ЕТĔРНЕ. Пушнарти Чкалов ячĕпе тăракан промартель пĕрремĕш кварталти производствăллă плана 133 процент тултарнă. Халĕ Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. И. Яковлевпа Н. Токарев çĕвĕçсем кулленхи ĕç нормине 150—160 процент таран тултарса пыраççĕ. А. Кузьмина юлташ апрель уйăхĕнчи плана апрелĕн 15-мĕшĕнчех тултарнă. Вăл кашни кунах ĕç нормине 200-шер процент тултарать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Пирвайхи результатсем

Лапсарти тата Мăн Карачурари промартельсем (Шупашкар р.) çĕнĕ çул пуçланас умĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем 1941 çулти производствăллă плана срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Лапсарти артель пĕрремĕш кварталта 101,6 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларса, плана 148,9 процент тултарнă. Уйрăмăнах артель март уйăхĕнче лайăх ĕçлерĕ, плана 196,3 процент тултарчĕ. К. Афанасьев, Т. Дмитриев, А. Илларионов, В. Семенова, В. Никифоров юлташсем виçĕ уйăх хушшинче кашниех 900 е 1000 чăпта çапнă. Февраль тата март уйăхĕсенче чăпта çапакан 37 станок производствăллă плана ытлашшипех тултарнă.

Мăн Карачурари артель те иртнĕ çултинчен темиçе хут лайăхрах ĕçлет. Кăçал виçĕ уйăх хушшинче 63,9 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларса, пĕрремĕш кварталти плана 176 процент, уйрăмăн март уйăхĕнчи плана 287 процент тултарнă.

Ку артельте те социализмлă ăмăртупа стахановла движени вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Пĕрремĕш кварталта чăпта çапакан 34 станок хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарнă. Уйрăм стахановецсем, сăмахран, В. Амакина, Д. Васильева, И. Филиппова, П. Семенов юлташсем кашниех 1000-шер чăпта ытла çапса кăларнă.

Артельре культурăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Артель членĕсем, пĕтĕмпе 80 çынна яхăн, Шупашкара Чăвашсен Академи театрне килсе «Нарспи» пьесăна коллективлăн курнă. Юлашки вăхăтра тĕрлĕ ыйтусем тăрăх 15 хутчен лекцисемпе докладсем туса ирттернĕ.

Май уявне хатĕрленсе, çак артельсем производствăллă çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Н. ЯШКОВ.

Çĕнĕ цехсем ĕçе тытăнаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Партипе правительство вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинчен уйрăм постановлени йышăннă хыççăн, «Красный строитель» промартелĕн производстви чылай ӳссе сарăлчĕ. Артель çумĕнче кӳршек-чӳлмек тата тукун авса урапа кустăрми тăвакан çĕнĕ цехсем ĕçлеме тытăнчĕç. Кунта уйрăмăнах тăмран кӳршек-чӳлмексем тăвакан цехăн çитĕнĕвĕсене кăтартса памалла.

Çак цех малтанхи кунсенчен тытăнсах плана ирттерсе тултарса пыма пуçларĕ. Кӳршек-чӳлмек тăвакансем С. Анисимов февраль уйăхĕнче план тăрăх 2950 литр кĕмелĕх савăт-сапа туса кăларас вырăнне 4369 литр кĕмелĕх, И. Акимов 4170 литр, А. Фадеев 4097 литр вырнаçмалăх паха савăт-сапасем туса кăларнă. Стахановец С. Фадеев март уйăхĕнчи плана 170 процент ытла тултарнă.

Тукун авакан цехра А. Тарасов бригади производство планне 130—164 процент тултарса пырать. Çавăн пекех Федин бригади плана куллен 150 процент тултарать. Çĕнĕ цехсенче стахановла движени кулленех сарăлса пырать. Çĕнĕрен йĕркеленĕ цехсем валли чĕртавар çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Артельре çĕнĕ цехсем уçăлаççĕ. Çак кунсенчех ачасем валли вылямалли теттесем, кӳршек-чӳлмексене сăрласа илемлетекен цехсем тата ată-пушмаксем юсакан мастерскойпа черепица туса кăларакан цех ĕçлеме тытăнаççĕ.

Артель членĕсем Май уявне производствăра ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ӳстернипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

В. АНДРЕЕВ.

Парторганизаци—ăмăрту организаторĕ

ЕЛЧĔК. Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз районри пысăк колхозсенчен пĕри. Вăл 456 хуçалăха пĕрлештерсе тăрать. Колхозри парторганизацинче 19 коммунист. Пуçламĕш парторганизаци колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче кăçал вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пырать. Çуракине хатĕрленес ĕçре комсомолецсем те паха примерсем кăтартаççĕ.

Партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхне вăйлатрĕ. Халĕ кашни колхозник хăйне хушнă ĕçе çийĕнчех тата пысăк пахалăхлă тума тăрăшать.

Колхозри бригадăсем тата звеносем агротехникăн хĕллехи мероприятисене пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлерĕç. Çапла ĕçленипе эпир торф, тислĕк кăларса хатĕрлемелли тата ытти удобренисем пухмалли, уйра юр тытмалли плансене ытлашшипех тултартăмăр. Вăрлăхсене пур культурăсем тăрăх та сортласа тасатрăмăр, Н. Виссарионов тата Г. Сафитов коммунистсем ертсе пыракан бригадăсем çуракине кăтартуллăн хатĕрленчĕç, хăйсен бригадисенче ăмăртăва тивĕçлипех пуçарса пычĕç.

Çуракине хатĕрленнипе пĕр вăхăтрах колхоз вăрман хатĕрлемелли тата туртармалли плансене ытлашшипех тултарчĕ. Çакăнпа пĕрлех колхозри ытти ĕççене те тума пуçăннă. 800 çын вырнаçмалăх клуб тума йывăç хатĕрленĕ. Халĕ клуб строительствине тытăннă. Мастерской организациленĕ. Мастерской трантас урапасем туса кăларма пуçăннă.

Колхозра стахановла шкул ĕçлет. Ку шкула коммунист-агротехник А. Вастулов юлташ ертсе пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем шкулта агротехникăна тимлесе вĕренеççĕ.

Çитес вăхăтрах çураки пуçланмалла. Эпир тырпулсене кĕске срокра, пысăк пахалăхпа акса хăварма хатĕр тăратпăр.

Е. МАРТЫНОВ.
Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ.

ВКП(б) ОБКОМĔНЧЕ

Колхозсенчи управлени аппарачĕ çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1941 çулти январĕн 15-мĕшĕнче «Колхозсенчи управлени аппарачĕ çинчен» постановлени йышăннă хыççăн, республикăри пур колхозсенче те управлени аппаратне пĕчĕклетес ĕçе туса ирттернĕ. Çапла майпа республикăри колхозсенче тӳрремĕнех производствăра ĕçлеме 6978 çын чухлĕ ĕç вăйĕ пушаннă. Колхозсен тивĕççĕр ӳстерсе янă штачĕсене пĕчĕклетни ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухма тата унпа лайăх усă курма май парать.

Анчах та уйрăм колхозсенче управлени аппарачĕн штатне пĕчĕклетес ĕç çине çиелтен пăхнисем палăраççĕ. Красноармейски районри «Красное Сормово» колхозра завхоз должноçне пĕтернĕ, халĕ вăл штатпа пăхнă агроном должноçне йышăнса завхоз ĕçне туса пырать. Шупашкар районĕнчи Иккасси колхозĕнче штатпа 2 сторож пулмалла, халĕ 4 сторож тытса усраççĕ. Штата пĕчĕклетес ĕç çине тĕрĕс мар пăхни те палăрать. Çĕрпӳ тата Шупашкар районĕсенче ветфельдшерсен должноçĕсене пур çĕрте те пĕтернĕ. Первомайски районра пиçмоносецсен должноçне пĕтерсе хунă, вăл ĕçе туса пыма хутла пĕлмен техничкăсене хушнă.

Нумай колхозсенче пĕр заведующи мĕнпур фермăсене ертсе пырать. Çакă вăл колхоз правленин выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ответлăхне пĕчĕклетет, фермăсен заведующийĕ вара пур фермăсене те кирлĕ пек ертсе пыма пултараймасть.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак ыйтăва тепĕр хут пăхса тухрĕ, ун пирки тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

25 сысна аминчен сахал мар фермăсенче, 50—60 ĕнерен кая мар фермăсенче, 400 сурăхран кая мар фермăсенче ытти ĕçрен хăтарнă заведующисем пулмалла. Фермăсенче выльăхсен хисепĕ çулте кăтартнинчен сахал пулсан, ун пек фермăсенче кашнинчех уйрăм бригадир пулмалла, вăл пĕр—паллă хисеп чухлĕ выльăхсене пăхса усрамалла тата тӳрех правленине пăхăнса тăмалла.

200 хуçалăхран сахал мар пĕрлештерсе тăракан колхозсенче ытти ĕçрен хăтарнă пиçмоносец пулмалла. Колхозра 200 хуçалăхран сахал пулсан, ун пек çĕрте ялсовечĕ тăрăх пĕр пиçмоносец, хăйсем пĕрлештерсе тăракан хуçалăхсен хисепне кура, кашниех ĕçшĕн тӳлемелле.

Уссе çитнĕ выльăхсем 200 пуçран кая мар тытакан колхозсенче ытти ĕçрен хăтарнă ветфельдшер е ветсанитар пулма пултарать, 200 пуçран сахал выльăх усракан колхозсенче случной пункт заведующипе ветсанитар ĕçне пĕр çын туса пымалла.

Колхозсенчи управлени аппарачĕн штатне колхоз правленийĕн туса хатĕрлемелле, ăна колхозниксен пухăвĕнче пăхса тухмалла, çакăн хыççăн ăна райсовет исполкомĕ çирĕплетмелле.

* * *

Сталинла премии лауреачĕсем çинчен научнăй кĕнеке

СССР Наукăсен Академийĕн президиумĕ Сталинла премии лауреачĕсен научнăй ĕçĕсемпе творчествăллă çулйĕрĕ çинчен научно-популярнăй кĕнеке кăларма йышăннă. Ăна тума редакци коллегине çирĕплетнĕ. Редколлеги председателĕ — академик Ферсман.

Çавăн пекех тата Сталинла премии лауреачĕсен научнăй ĕçĕсем çинчен лекцисемпе докладсен циклне организацилеме йышăннă. (ТАСС).

Çураки

Апрелĕн виççĕмĕш пилĕккунлăхĕнче çĕнĕрен вуншар районсем çураки пуçланă. Вăл Сталинград, Чернигов, Волынь, Дрогобыч облаçĕсенче тата Приморье крайĕнче пуçланнă.

Апрелĕн 15-мĕш тĕлне Союзри уйхирсенче 10.725 пин гектар çуртри акнă, е вăл пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне акнинчен 3.830 гектар нумайрах. Измаил облаçĕнче çураки лайăх пырать, унта плана 59 процент тултарнă та ĕнтĕ. (ТАСС).

Литва ССР столицинчи строительство

Литва ССР правительстви кăçалхи çул республика столицин — Вильнюс хулин — хуçалăхне вăйлатас ĕç валли 60 миллион тенкĕ панă.

Республика столицине Каунас хулинчен Вильнюса куçарнă май кăçалхи çул республика учрежденийĕсене вырнаçтарса тухмалли çуртсене йĕркелес ĕçре татах 2 миллион тенкĕне яхăн расход тăваççĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Отчетпа суйлав пухăвĕсене тĕплĕн хатĕрленсе ирттермелле

СОВЕТСКОЕ. ВКП(б) райком планĕ тăрăх, пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 11-мĕшĕнче пуçланчĕç. Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерме кашни организаци çумне парти райкомĕн членĕсене çирĕплетнĕ.

Советски районра пуçламĕш парторганизацисем—15, кандидатсен групписем—12. Ку вăхăтчен тăватă парторганизацинче: парти райкомĕнчи, райçĕрĕç пайĕнчи, Тури Ачакри тата Мăн Чурашри «Прогресс» колхозри пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче парти райкомĕ хăйĕн ларăвĕнче пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем мĕнле пахалăхпа иртнине тĕрĕслес шутпа парторганизацисем çумне çирĕплетнĕ П. Никитин, А. Никифоров, П. Зубков юлташсенчен отчетсем итлерĕ. Отчетсенчен çакă курăнчĕ: ВКП(б) райкомĕнчи, райçĕрĕç пайĕнчи тата Мăн Чурашри «Прогресс» колхозри пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа иртнĕ.

Райçĕрĕç пайĕнчи пуçламĕш парторганизацинче отчетпа суйлав пухăвĕ пысăк çĕкленўпе иртнĕ. Пренире тухса калакан юлташсем парторганизаци ĕçне лайăхлатма паха сĕнўсем панă, çитменлĕхсене, вĕсем мĕншĕн пулса пынине большевикла тимлĕхпе критикленĕ.

Уйрăм пуçламĕш парторганизацисем отчетпа суйлав пухăвĕсене хатĕрленмесĕр ирттереççĕ. Тури Ачакри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Потапов юлташ отчетлă доклада пуху уçăлас умĕн кăна çырса çитернĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕ каçхине 6 сехетре уçăлас вырăнне 8 сехетре тин уçăлнă. Пуху хăш вăхăтра пуласси çинчен тĕплĕн пĕлтермен пирки П. Ильин, А. Ильин коммунистсем пухăва икĕ сехет кая юлса пынă. Парторганизацин секретарĕ Потапов юлташ хăйĕн отчетлă докладĕнче парторганизацин çитменлĕхĕсем çинчен пачах каламан. Ĕçре çитменлĕхсем нумай. Коммунистсем колхоз производствинче çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене вăхăтра тултармаççĕ.

Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлўлĕхне хăпартас тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Парторганизаци секретарĕ Потапов çак ыйтупа интересленмен. Вăл уйрăм коммунистсем мĕнле вĕренсе пыни çинчен пачах пĕлмест.

Пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсем парти хуçалăхне йĕркелесе çитернипе иртмелле. Анчах хăшпĕр парторганизацисенче парти хуçалăхне йĕркеллĕ тытса пыма тăрăшмаççĕ-ха. Пуçламĕш парторганизацинче отчетпа суйлав пухăвĕсене малтанах тĕплĕн хатĕрленсе, самокритикăпа критикăна тивĕçлипе сарса пырса, ВКП(б) Центральный Комитечĕн инструкцине çирĕп пăхăнса ирттермелле. Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерес ĕç çине çиелтен пăхни, ытлашши васкани пулмалла мар.

А. НИКИФОРОВ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн инструкцине пăсмалла мар

Парторгăнсен суйлавĕсене ирттерме хатĕрленнĕ май Улатăр узелĕнче социализмлă ăмăрту сарăлса пычĕ, стахановецсен шучĕ ўсрĕ. Поездсем илсе çўрекен коллектив паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Март уйăхĕнче вагонсем тиемелли плана 101 процент, вагонсене пушатмалли плана 114 процент пурнăçланă. Поездсене график тăрăх йышăнса ăсатасси те чылаях лайăхланчĕ. Апрель уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче те вагонсем тиемелли тата пушатмалли плансене ытлашшипех тултарнă. Диспетчерсен коллективĕ март уйăхĕнче 10020 вагон-сехет перекетленĕ.

Солнцева, Климанов, Ерлыгин диспетчерсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Улатăрти депори пуçламĕш парторганизаци отчетпа суйлава хатĕрленнĕ май, паровозсене пысăк пахалăхпа, график тăрăх юсаса кăларма пулнă.

Красный Узел станцинчи пуçламĕш парторганизаци хăй умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Вагонсене график тăрăх юсаса кăлараççĕ. Апрелĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче ĕç тухăçлăхĕ 119 процента çити ўснĕ. Малтанхи вăхăтра нормăна 16 çын тултарайман пулсан, халĕ унашкал рабочисем икĕ çын кăна.

Чугунçулсене куллен йĕркеллĕ тытассишĕн кĕрешў сарăлсах пырать. Чугунçул çинчи рабочисемпе служащисем хушшинче дисциплина çирĕпленсе пыни палăрать.

Улатăр станцинчи чугунçул транспорчĕн техникумĕнчи, чугунçул клубĕнчи, 5-мĕш номерлĕ шкулти, Красный Узелпа Чамзинка станцийĕсенчи пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа иртрĕç.

Коммунистсем пуçламĕш парторганизацисен ĕçне тивĕçлипе критиклеççĕ. Вĕсем чугунçул çинче XVIII партконференцин решенийĕсене çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пынине палăртаççĕ.

Хăшпĕр станцисем ку вăхăтченех япăх ĕçлеççĕ. Акă, Чамзинка станцинче шыв колонкине тĕрĕс мар вырнаçтарнă пирки поездсене тăтăшах тытса тăраççĕ. Март уйăхĕнче 20 поезда 183 минута хушши тытса тăнă.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ суйлавсем пирки кăларнă инструкцине малтан тĕплĕн ăнлантарса панă пулсан та Улатăр чугунçул станцин клубĕнчи, Чамзинка станцинчи пуçламĕш парторганизацисенче пăснă. Чамзинка станцинчи пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче секретарĕн заместительне суйламасăр хăварнă. Улатăр чугунçул станцин клубĕнчи парторганизацинче те çакнашкал йăнăш тунă.

Политотделăн Улатăрти отделенийĕ çак йăнăшсене шута илнĕ, вĕсене сийĕнчех тўрлетнĕ. **И. ЭЙЗЕНБРАУН.**

Çамрăк коммунистсене сахал пулăшнă

ЙЕПРЕÇ. Эпеçри пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче тухса калакансем çамрăк коммунистсене партиллĕ ĕçе активлăн хутшăнтарманни çинчен каларĕç. Парторганизацинче 6 коммунист, вĕсенчен тăваттăшин халиччен нимĕнле поручениисем те пулман.

Шатулкин тата Васильева юлташсен пĕтĕмĕшлĕ пĕлў çителĕксĕр, вĕсене пулăшу кирлĕ. Анчах пуçламĕш парторганизаци вĕсене «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренме пулăшман.

Халăх хушшинче политикăллă агитаци ĕçне юлашки вăхăтра чылай лайăхлатнă. Агитаторсем халь колхозниксене ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Парторганизаци ялхуçалăх ыйтăвĕсем çинчен хăйĕн пухăвĕсенче нумай сўтсе-явнă. Анчах кунти колхоз тырпул тухăçлăхне ўстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине пĕлме тăрăшман. Çакна пула ĕнтĕ колхоз иртнĕ çулта агротехникăна пăхăнса ĕçлемен, парторганизаци колхоз правленийĕ ĕçне контроль туса тăман, колхоз производствине лайăхлатма сахал пулăшнă.

В. ВИШНЕВСКИЙ.

Большевикла критика сарăлса пырать

Партин пуçламĕш организацийĕсенче отчетпа суйлав кампани пуçланнăранпа Комсомольски районĕнчи 6 пуçламĕш организацинче суйлавсем пулса иртрĕç. Калас пулать, отчетпа суйлав пухăвĕсем большевикла критикăпа самокритика анлăн сарăлнипе иртеççĕ. Секретарьсен отчечĕсем тăрăх тухса калакансем парторганизацисен ĕçĕнчи, колхозсенчи, учреждениесенчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене хăвăртрах пĕтерме ĕçлĕ кăтартусем, сĕнўсем парса хăвараççĕ.

Иртсе пыракан отчетпа суйлав кампанин тепĕр уйрăмлăхĕ вăл—пухусенче коммунистсем пурте пулни, отчетлă докладсем тăрăх пурте тухса калани пулать.

Иртнĕ отчетпа суйлав кампани вăхăтĕнче пуçламĕш организацисен ĕçĕсем çинчен докладсем çырма парти райкомĕ схема—вопросник панă пулсан, кăçал ун пек практика çук. Паллах ĕнтĕ, отчетсем çырма схема хатĕрлесе пани вăл парти организацин тата организацинче учетра тăракан кашни коммунистăн ĕçне пур енчен те кăтартса пама пултараймасть. Схема туса пани пуçламĕш организацин секретарĕсен пуçарулăхне пўлсе пырать.

Партин Комсомольски райкомĕ суйлав мĕнле иртсе пыни çинчен сўтсе явса, уйрăмăнах малтанхи кунсенче, критикăпа самокритика çителĕксĕр пулнине палăртрĕ. Юлашки кунсенче иртнĕ пухусен ĕçĕсене илсе пăхсан, критикăпа самокритика вăйлăн сарăлса пыни курăнать. Ку ĕнтĕ коммунистсем политика тĕлĕшĕнчен ўссе пынине тата партиллĕ ĕçсемпе ытларах интересленнине кăтартать.

Пухусенче секретарсен отчечĕсем тăрăх тухса калакансем колхоз производствинчи çитменлĕхсене тата парти райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те татăклăн кăтартса параççĕ.

Парти райкомĕ пуçламĕш организацисене, работниксене вĕсен кулленхи ĕçĕнче ертсе, вĕрентсе пымалла. Партипе правительство йышăннă решенисене пуçламĕш организацисем мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемелле. Анчах, тўрех калас пулать, парти райкомĕ пуçламĕш организацисене ку тĕлĕшпе кирлĕ таран пулăшу парайман.

Тĕслĕхшĕн акă, райуполнаркомзагри пуçламĕш организацин ĕçне илсе пăхăпăр. Ку организацин секретарĕ пулса ĕçленĕ Низаметдинов государство укçине çаратса пурăннă, хăйĕн ĕçне тĕпренех япăхтарса янă. Çавăншăн ăна парти ретĕнчен кăларнă. Анчах райком енчен ку организацине çирĕплетме кирлĕ таран пулăшни пулман. Организацин нумай вăхăт хушши секретарĕ те пулман. Çавна пула ĕнтĕ кунта коммунистсем хушшинче воспитани ĕçĕ япăх тăнă.

ВКП(б) Комсомольски райкомĕ ку организацине куллен пулăшса пыма оргинструкторски отделĕн инструкторне Кириллов юлташа çирĕплетнĕ, анчах инструкторăн пĕр организаци кăна мар. Инструктор пĕр организаципе кăна ĕçлени—унăн пĕтĕм участокĕнчи ĕçне япăхлантарма пултарнă.

Парти райкомĕн ĕçне Урмаеври пуçламĕш организацинче те вăйлă критиклерĕç. Урмаеври «Янга Турмыш» колхоз хуçалăх тата организаци енчен çирĕпех мар. Кунта иртнĕ çулта 90 çын 80-шар ĕçкунĕ туман. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене тултарса пымасть. Парти райкомĕ колхоз юлса пынине, ăна пулăшу кирлине лайăх пĕлнĕ. Анчах, апла пулсан та, колхоза малти рете кăларас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемен.

Районри çĕрĕç пайĕ «Янга Турмыш» тата çавăн пек юлса пыракан ытти колхозсене те пулăшу парас вырăнне «çав колхозсем срывать тăваççĕ» тесе кăшкăрнă, колхоз председателĕсене айăплама тытăннă. Анчах вĕсене пулăшу парасси çителĕклĕ пулман. Парти райкомĕ те районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен коммунистсенчен юлса пыракан колхозсене пулăшу парассине вăйлатма тивĕçлипе ыйтман.

Райком ячĕпе пыракан критикăра пуринчен ытларах пропагандăпа агитаци пайне тивет. Пуçламĕш организацисенче иртнĕ пухусенче кашнинчех райкомăн пропагандăпа агитаци пайне вăйлăн критиклеççĕ. Ку критика питĕ тĕрĕс. Пропагандăпа агитаци пайĕ коммунистсене марксизм-ленинизмăн теорийĕпе хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен. Уйрăмăнах парти кандидачĕсене члена кĕме пур енчен те хатĕрлес тĕлĕшпе пуçламĕш организацисене пулăшу парса пырайман.

Кашни колхозра пекех агитколлективсем организациленĕ. Вĕсене ертсе пыма парти райкомĕ руководителсем çирĕплетнĕ. Пропагандăпа агитаци пайĕ кашни агитколлектив руководителĕн ĕçĕсене тĕрĕслесе пыман, вĕсем партиллĕ поручение мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемен. Акă, парти кандидатне Алексеев юлташа Урмаеври агитколлектива ертсе пыма çирĕплетнĕ пулнă. Алексеев юлташ районран кайса хăйĕн агитколлективне кирлĕ таран ертсе пырайман, çав вăхăтрах парти райкомĕ те унăн ĕçне тĕрĕслесе тăман. Çавна пула та ĕнтĕ ку коллектив япăх ĕçлесе пынă, хăшпĕр агитаторсем список çинче кăна шутланса тăнă.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем пуçланнăранпа критикăпа самокритика, коммунистсен активлăхĕ ўссе пыни кашни организацинчех курăнать. Парти организаци умĕнче тăракан задача вăл — коммунистсен политикăллă активлăхне татах çĕклесси, ĕçри çитменлĕхсене пĕтересси, пуçламĕш организацин ертсе пыракан оргăнĕсене чи çирĕп большевиксене суйласа хăварасси пулать.

П. ОСИПОВ.

ВКП(б) Комсомольски райкомĕн секретарĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Красноармейски районри больницăн çĕнĕ çурчĕ.
Г. Костин фото-ўкерчĕкĕ.

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Районри хаçатсем умĕнче тăракан пысăк задача

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ўстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тўлесси çинчен» йышăннă постановлени колхоз производствин пĕтĕм отраçлисене малалла ўстерсе пырас ĕçре çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл постановлени—партипе правительство колхоз стройне çирĕплетессишĕн, колхозниксен пурнăçне лайăхлатса пырассишĕн тăрăшнине кăтартса паракан çĕнĕ документ.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тўлес йĕрке пĕтĕмпех социализмăн тĕп принципĕнчен, Сталинла Конституцире çырса хунă: «кашнинчен унăн пултарулăхне кура, кашнине унăн ĕçне кура» текен принципран тухса тăрать.

Колхозсенче ĕç тухăçлăхне ўстерме пулăшакан çак постановлени çинчен пропагандăлас енĕпе районри хаçатсем умĕнче хисеплĕ тата ответлă задача тăрать. Районсенчи хаçатсем партипе правительство решенине колхозниксем саламлани çинчен çырнипе çеç лăпланса лармалла мар. Вĕсен, вырăнти конкретлă примерсем тăрăх, çав постановлени колхоз производствине пур енĕпе те сарса пырас çĕрте мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăнине, унăн пĕлтерĕшне кăтартса парас пулать.

Колхозниксене ĕçшĕн тўлемелли çĕнĕ система малта пыракансене хавхалантарать, çав вăхăтрах вăл, уравниловкăна пĕтерсе хума май парать.

«Пушкăрт ялсоветĕнчи (Сĕнтĕр р.) «Çĕнĕ çул» колхозра иртнĕ çулта М. Алексеев юлташ бригади гектартан 22 центнер, Константинов юлташ бригади—17-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Алексеев юлташ бригадинчи колхозниксем аванрах ĕçлесе тырă ытларах туса илнĕ. Апла пулсан та, икĕ бригадăри колхозниксем ĕçшĕн пĕр пекех илнĕ» тесе çырать **«Ĕç ялавĕ»** хаçат. Ĕçшĕн тĕрĕс мар тўлес йĕркене постановлени йăлтах пĕтерсе хурать. Халĕ ĕнтĕ кашни колхозника ĕçшĕн — унăн ĕç хисепĕпе пахалăхне шута илсе тўлеççĕ. Çапла туни, колхозниксем малалла татах та хастарлăрах, ăнăçлăрах ĕçлеме пуçлĕç, юлса пыракансем—малта пыракансене хуса çитессишĕн кĕрешĕç. Районсенчи хаçатсен колхозниксене çаксем çинчен тĕплĕн каласа памалла та ĕнтĕ.

«Çĕнтерў çулĕ» хаçат (Хĕрлĕ Чутай р.) «Чапаев ячĕпе тăракан колхоз çураки умĕн» ятлă страница кăларнă. Вăл страницăра колхоз председателĕ Я. Мадиков, иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ П. Кудряшов, комсомол организацин секретарĕ Г. Еремеев, колхозри яровизатор И. Скворцов юлташсен статьисене пичетленĕ. Вĕсем хăйсен колхозĕ кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес тĕлĕшпе туса пыракан ĕçсем çинчен, СНК СССР тата ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени колхоз умне лартнă задачăна пурнăçа ăнăçлăн кĕртме хавхалантарни çинчен каласа панă. Хальхи вăхăтра колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине, ку тĕлĕшпе тунă ĕçĕн пахалăхне тĕрĕслесси тĕп задача пулса тăрать. Района пĕтĕмĕшпе илсе мар, уйрăм колхоз ака ĕçне тытăнма мĕнле хатĕрленсе çитнине кăтартса памалла. Ку енчен илсен, «Çĕнтерў çулĕ» аван ĕç тунă. Анчах хаçат колхозниксене ĕçшĕн хушса тўлесси çинчен сахал çырать-ха.

Апрелĕн 1[illegible]-мĕшĕнче хаçат «Память Ленина» колхозри «Хĕм» стена хаçачĕ çинчен чылай пысăк статьях пичетлесе кăларнă. Вăл статьяра стена хаçачĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен каланă пулсан та, СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) колхозниксене ĕçшĕн хушса тўлесси çинчен йышăннă постановленине асăнман, стена хаçачĕсем умĕнче тăракан чи пысăк задачăна манса хăварнă.

Районри хаçатсенчен чылайĕшĕ ĕçшĕн çĕнĕ йĕркепе тўлесси çинчен сахал çыраççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем, колхозниксем çак постановленине ырлани çинчен çырнă материалсене пичетленипе çеç лăпланса ларчĕç. Постановлени çинчен колхозниксене ăнлантарса парассине çуракине пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе çитес ĕçпе çыхăнтарса пымаççĕ.

Акă мĕн çырать Тăвай районĕнчи «Большевикла колхозшăн» хаçат апрелĕн 6 мĕшĕнче тухнă номерте: «Çĕнĕ Пуянкассинчи «Большевикла колхозшăн» колхоз çуракине хатĕрленессипе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Ялхуçалăх машинисене ремонтланă, вăрлăхсене сортланă т. ыт. Анчах ĕçре çитменлĕхсем **чылай-ха.** Кĕскен каласан, хаçат çырнă тăрăх, колхоз çуракине хатĕрленсе çитмен. Колхозри агрошкул ĕçлемест. **«Çитĕнўсем те чылай», «çитменлĕхсем те чылай»**, тесе çырни никама та усă кўме пултараймасть. Начар пулсан, начар хатĕрленеççĕ темелле, ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелли майсене конкретлă кăтартса памалла.

Хальхи вăхăтра колхозсенче çуракине хатĕрленес хĕрўллĕ ĕç пырать. Бригадăсен, звеносен планĕсене тăваççĕ, звеносене йĕркелеççĕ. Хăшпĕр колхозсем çĕнĕ постановлени тăрăх колхозниксене аванс пама хатĕрленеççĕ. Апла пулсан та, колхозсенче пыракан хĕрўллĕ ĕçсене хăшпĕр райхаçатсен страницисенче курма çук. Тунă ĕçсем çинчен çырнипе хаçатăн ĕçĕ пĕтмест вĕт-ха, унăн колхозниксен массине партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилемелле.

Эпир заочниксемпе мĕнле ĕçлетпĕр

ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, «Большевистская печать» журнал çумĕнче 1940 çулти февралĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен заочнăй курсĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Пирĕн редакци стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсенчен чи лайăх ĕçлекенсене çав курса явăçтарчĕ. Вăл çынсене ВКП(б) райкомĕн ларăвĕнче пăхса тухса çирĕплетрĕмĕр.

Вĕренў çулĕ пуçланнă хыççăн программа тăрăх заочниксене пухса консультацисем ирттерме тытăнтăмăр.

Пирĕн районра 19 заочник. Вĕсем хушшинче аван вĕренсе пыракансем, тăрăшса ĕçлекенсем сахал мар. Акă, Альгеш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри «Трактор» стена хаçат редакторне Шульдяков юлташа илер. Вăл курсра вĕренме тытăниччен стена хаçатне уйăхра пĕрер номер кăна кăларса тăнă. Хаçатăн пахалăхĕ те çителĕксĕр пулнă. Хаçата çыракансем те сахалчĕ. Шульдяков юлташ вĕренўре хăйĕн пĕлўне ўстерсех пычĕ. «Трактор» хаçат январь уйăхĕнчен пуçласа уйăхра икĕ хут, апрель уйăхĕнчен пуçласа 3 хут тухса тăма тытăнчĕ. Хаçатăн авторитечĕ сисĕнмеллех ўсрĕ. Колхозри паха опытсене, ĕçри çитменлĕхсене хаçат куллен çутатса тăрать. Хаçата çырса тăракансен йышĕ те нумайланчĕ. Яланах çырса тăракан селькорсем 15 çын ытла шутланаççĕ.

Курсран вĕренсе тухнă К. М. Сарра юлташ—Шемшерти агитколлектив руководителĕ. Агитколлектив руководителĕ пулса стена хаçат редакторĕсене тăтăшах пулăшса тăрать, канашлусем туса ирттерет. Хальхи вăхăтра колхозсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Çавăн пекех, Степанов, Риванов, Любинарский, Кузьмин юлташсем курсра аван вĕренсе, ĕçре паха примерсем кăтартаççĕ. Вĕсем стена хаçачĕсене йĕркеллĕ, вăхăтра кăлараççĕ. Уйрăмăнах çуракине хатĕрленес ĕçре пысăк активлăхпа ĕçлеççĕ.

Калас пулать, вĕренўре начар ĕлкĕрсе пыракан редакторсем те пур. Вĕсем редакци ярса панă кĕнекесене вуланипех, консультацисем итленипех лăпланса лараççĕ. Акă, Александров, Петрова, Владимирова юлташсем вĕренў çине кирлĕ пек пăхман пирки колхозра стена хаçат ĕçне япăхтарса янă. Хаçатсем вăхăтра тухмаççĕ. Тулик Хураскинчи Александров юлташ редакцилекен «Культурăшăн» стена хаçачĕ кăçал 2 номер кăна тухнă. Çакăн пек çитменлĕхсене халех пĕтерсе, асăннă хаçатсене лайăх ĕçлекен тума тăрăшатпăр.

Халĕ ĕнтĕ, вĕренў çулĕ пĕтнĕ май, заочниксен пĕлўлĕхне тĕрĕслемелли вăхăт пуçланать.

Эпир вĕренў çулне вĕçлемешкĕн чи малтан çирĕп план туса хатĕрлерĕмĕр. Вăл плана акă мĕн кĕртрĕмĕр. Вырăнта 3 хут татах та консультаци туса ирттеретпĕр. Вăл консультацисенче «Организация работы стенной газеты», «Как править заметки» тата «Оформление стенной газеты» темăсемпе калаçусем пулаççĕ. Калаçусенче лайăх ĕçлекен стена хаçачĕсен опычĕпе паллаштаратпăр. Хальхи вăхăтра заочниксен пĕлўлĕхне тĕрĕслеме 2 хутчен консультаци туса ирттернĕ. Вăл консультацисенче лайăх вĕренекен заочниксен опычĕсем çинчен каласа панă. Кунсăр пуçне кашни заочник патĕнче пулса индивидуальнăй консультацисем паратпăр. Вăл консультацисене ирттерме редакци работникĕсене заочниксем патне çирĕплетнĕ.

Вĕренў çулĕ пĕтнĕ хыççăн майăн 5-мĕшĕнче стена хаçат редакторĕсемпе заочниксен канашлуне туса ирттеретпĕр. Канашлура лайăх ĕçлекен заочник-редакторсен опычĕсемпе паллаштаратпăр. Ку тĕлĕшпе 2—3 редактор-заочникăн отчетне итлетпĕр. Çавăнпа пĕрлех, майăн 5-мĕшĕнче культура çуртĕнче районри стена хаçачĕсен выставкине организацилетпĕр. Выставкăра лайăх ĕçлекен стена хаçат редакторĕсен ĕçĕсене кăтартатпăр. Хăйсен хаçачĕсемпе паллаштаратпăр. Выставкăна хутшăннă чи лайăх стена хаçачĕсен редакторĕсене премилеме палăртса хутăмăр.

Л. СЕМЕНОВ.

Шупашкар районĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçат редакторĕ.

Промышленность тата транспорт кадрĕсемпе ĕçлесси

Партин XVIII конференцийĕ Маленков юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă резолюцире парторганизацисен хуçалăх организацисенчи ертсе пыракан кадрсене кăна мар, инженерно-технически работниксене те лайăх пĕлсе тăмалла, тесе кăтартса панă. Конференци пуличчен ВКП(б) Канаш райкомĕ те вăтам звенори кадрсем, сăмахран, мастерсем, цехсен начальникĕсем çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнă. Вĕсене райком хăйĕн номенклатурине кĕртмен. Районри 25 предприятире тата транспортра ĕçлекенсенчен райком номенклатуринче пурĕ те 105 çын çеç пулнă. Халĕ вара, райком номенклатурине кĕртме тивĕçлĕ инженерно-технически работниксене шута илнĕ хыççăн, вĕсен хисепĕ икĕ хут ытларах ўсрĕ. Вагонсем юсакан заводра кăна 96 мастер ĕçлет. ВКП(б) райкомĕн, пуçламĕш парторганизацисен вĕсем çинчен лайăх пĕлес пулать, вĕсен производствăри рольне çĕклес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле. Юлашки вăхăтра ВКП(б) райкомĕ ку тĕлĕшпе ытларах ĕçлеме пуçларĕ. Конференци хыççăнхи вăхăтра райком бюровĕ 18 çынна çирĕплетнĕ. Вĕсем хушшинче мастерсем, комплекс начальникĕсем, цех начальникĕсем пур.

Предприяти ăнăçлăн ĕçлесси кадрсем улшăнса тăрассине пĕтернинчен, кадрсене лайăх суйласа илсе, тĕрĕс вырнаçтарнинчен нумай килет. Кадрсем тăтăшах улшăнман предприятисенче ĕç те ăнăçлăн пырать. «Красный воин» артель правлени председателĕ пулса М. Г. Корчагин юлташ 4 çул ытла ĕçлет. Вăл артель хăйĕн производство планне яланах тултарать. Кăçалхи пĕрремĕш квартал планне срокчен ирттерсе тултарнă. «Авангард» артель правлени председателĕ пулса Герасимов юлташ ĕçлет. Унта суйличчен вăл çав артельтех бухгалтер пулса ĕçленĕ. Артель плана ирттерсе тултарать. Сталин ячĕпе тăракан артельте те çавăн пек картинăна куратпăр.

Анчах пур организацисенче те çавăн пек мар-ха. Чылай хуçалăх руководителĕсем, пуçламĕш парторганизацисем кадрсене тĕплĕн тĕрĕслемесĕр суйласа илеççĕ. Кайран вара ĕçрен кăлараççĕ. Çапла вара, вагонсем юсакан заводра çулталăк хушшинче цехсен, отделсен тата комплекссен начальникĕсем 11 çын улшăннă. Производство отделĕн начальникĕ пулса тăваттăмĕш çын, тимĕрç цехĕн начальникĕ пулса виççĕмĕш çын, вагонсем юсакан цехри пĕрремĕш комплекс начальникĕ пулса тăваттăмĕш çын ĕçлет. Инженер А. Н. Калинина юлташ çулталăк хушшинче автоматнăй мастерскойĕнче мастер, комплекс начальникĕ пулнă, халĕ вара технически контроль отделĕн инспекторĕ пулса ĕçлет. Демкин юлташ çулталăк хушшинче пилĕк ĕçре пулнă. Вагонсем юсакан заводра, пĕтĕмпе илсен, çулталăкра 31 çынна ответлă вырăнсене куçарнă. Çав вăхăтрах 12 çынна кĕçĕн ĕçсене лартнă. Районри предприятисем тăрăх илсен çакна куратпăр: хăйĕн обязанноçне пурнăçа кĕртме пултараймасть, тесе 21 çынна ĕçрен кăларнă. Вĕсем мастерсем, артель председателĕсем, цех начальникĕсем.

Кадрсене тĕрĕс суйласа илессишĕн предприяти руководителĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Халĕ, предприятисенчи кадрсене тĕрĕсленĕ чух, районри чылай предприятисен руководителĕсем йăнăшсем туни курăнать. Акă, ашкакай комбинатне илер. Унта директор пулса А. Н. Бибарцев юлташ ĕçлет. Комбинатра вăл çĕнĕ çын мар, икĕ çул ытла иртнĕ ĕнтĕ вăл директор пулса ĕçлеме тытăннăранпа. Кадрсене суйласа илсе тĕрĕс вырнаçтарма, вĕсен пĕлўлĕхне, ĕçри квалификацине ўстерсе пыма вăхăт пулнă. Вăл çаксене туман. Юлашки 4—5 уйăхра кăна плановăй отдел начальникĕсем 4 улшăннă. Плановăй отдел начальникĕ пулса ĕçлеме пĕррехинче Бибарцев юлташ Махач Кала хулинчен çын чĕнсе илнĕ. Ăна вара çул укçи 1066 тенкĕ тўленĕ. Анчах, вăл хваттер çук тесе, каялла тухса кайнă. Кадрсене суйласа илес ĕç çине çиелтен пăхни кадрсем улшăнса тăрасси патне илсе пырать. 1940 çулти сентябрь уйăхĕнче Толстякована мастер пулса ĕçлеме илнĕ. Уйăх çурă ĕçленĕ хыççăнах ăна растрата тунăшăн ĕçрен кăларса ямалла пулнă. Хламин та 10 кун çеç ĕçленĕ.

Комбинат директорĕ Бибарцев кадрсене пулăшас, вĕрентес вырăнне административлă взысканисем парас çул çине тăнă. Иртнĕ 9 уйăх хушшинче вăл 20 работнике выговорсем парса тухнă. Мастер-технолог Ядерец юлташа икĕ уйăх хушшинче икĕ выговор панă. Бибарцев хăй каланă тăрăх, Ядерец юлташ лайăх работниксенчен пĕри шутланать. Апла пулсан, мĕншĕн-ха выговорсем халĕ те ун çинчех тăраççĕ? Комбинатра панă взысканисене нихçан та пăрахăçа кăлармаççĕ. Унта работниксен авторитетне пĕтерме хăтланнисем те пулаççĕ. Ядерец юлташ каланă тăрăх, производство заведующийĕ Ларин цеха пырсанах мастер ĕçне хăй аллине илет, ятлаçма, кăшкăрма пуçлать, çапла вара вăл рабочисем умĕнче мастер авторитетне чакарать.

Кадрсен политикăллă пĕлўлĕхне тата ĕçри квалификацине ўстерес тĕлĕшпе ĕçсем çителĕксĕр. Вагонсем юсакан заводри парторганизаци мастерсем, цех начальникĕсем хушшинче япăх ĕçлет. Хăшпĕр мастерсем хаçат-журналсем вуламаççĕ, хăйсен квалификацине ўстерес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Беляков юлташа мастер пулса ĕçлеме 1939 çулта куçарнă. Вăл хăй каланă тăрăх, çав вăхăтранпа хаçат çырăнса илмен, технически литература вуламан. Мастер Родичкин юлташ та çавăн пекех, вăл комсомолец, хаçат вуламасть, парти историне те вĕренме тытăнман. Мастерсенчен сахал пайĕ кăна партин XVIII конференци решенийĕсене хăйсем тĕллĕн вĕренме тытăннă. Паллах, хăйĕн пĕлĕвне çĕклесе пыман работниксем ĕçре пуçарулăх кăтартма пултараймаççĕ, вĕсем çўлтен кăтартса панисене механически пурнăçа кĕртекен çынсем çеç пулса тăраççĕ.

Политика тĕлĕшĕнчен ўссе пыракан тата хăйĕн ĕçри квалификацине çĕклесе пыракан работник пачах урăхла: производствăна вăл культурăллă организацилеме пултарать. Кăна нумай фактсемпе çирĕплетсе пама пулать. «Авангард» артельти атă-пушмак юсакан мастерской заведующийĕ В. М. Михайлов юлташ çулталăк хушшинче художествăллă литературăран 38 кĕнеке вуланă. Хаçат-журналсене те тăтăшах вулать, рабочисем хушшинче калаçусем ирттерет. Мастерскойра ĕç дисциплинине пăсассине халĕ пачах пĕтернĕ. Мастерской лайăх пахалăхлă продукци кăна кăларать.

Партин XVIII конференцийĕ предприятине ертсе пыма пултарайман, чугунçул çинче производствăра йĕркелĕх тума пултарайман çемçешке работниксене улăштарасси çинчен тивĕçлĕ оргăнсем умĕнче вăхăтра ыйту лартма хушса хăварчĕ. Шел, анчах ун пек работниксене Канаш районĕнчи предприятисенче те тĕл пулатпăр. Канаш станцин руководителĕсем нумай калаçма юратаççĕ. Мĕнле пурнăçа кĕртеççĕ-ха вĕсем хăйсен умĕнче тăракан здачăсене? Поездсене график тăрăх 64—67 процент çеç яраççĕ, простойсем нумай пулаççĕ. Мартăн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче вагонсем 29,1 сехет (17 сехет вырăнне) простой тунă, иккĕмĕш вунăкунлăхра 26,8 сехет простой пулнă. Мартăн 24-мĕшĕнче станцире Дубов дежурнăй пулнă сменăра 1181 номерлĕ поезда график тăрăх кăларса яман. Çапла вара составри пĕтĕм вагонсем 1962 сехет простой тунă. Васянин дежурнăй пулнă чухне составитель Б. Петров, сцепщик Сергеев вагонăн стойкине сиенленĕ. Çавăн пирки поезд 2964 вагон-сехет простой тунă.

Депора та брак пулассине пĕтерменха. Март уйăхĕнче паровоза пăснисем 5 хутчен пулнă. Машинист Иванцов мартăн 24-мĕшĕнче 58 номерлĕ пассажирски поезда 59 минута кая юлса илсе çитернĕ. Мартăн 26-мĕшĕнче машинист Арзамасов çав поездах 5 сехет кая юлса илсе çитернĕ. Депо руководителĕсем: депо начальникĕн заместителĕ Александровский, инструктор-машинистсем Абрамовпа Корнеев юлташсем çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешес вырăнне «кăмрăк начар» тенипе витĕнме пикенеççĕ. Вĕсем машинистсен ĕçĕсемпе сахал интересленеççĕ, машинистсене кирлĕ пек пулăшмаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ унта брак чакмасть. Январĕн 1-мĕшĕпе мартăн 26-мĕш хушшинче брак тунăшăн тата СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указа пăснăшăн машинистсемпе вĕсен помощникĕсене тата кочегарсене 20 çын ытла ĕçрен кăларнă. Станцири кадрсен отделĕ (начальникĕ Шмелев), çавăн пекех депори кадрсен отделĕ (начальникĕ Крючков пулнă) çынсене тĕрĕслесе вĕренес вырăнне пуринчен ытларах канцеляринче ларса ирттернĕ.

Промышленность предприятийĕсене тата транспорта ăнăçлăн ĕçлекен тумашкăн кадрсене суйласа илсе тĕрĕс вырнаçтарни, кдрсен пĕлўлĕхне ўстерсех пыни кирлĕ. ВКП(б) райкомĕн, пуçламĕш парторганизацисен, хуçалăх руководителĕсен çав тĕлĕшпе кулленех çине тăрса ĕçлес пулать.

И. КОРНИЛОВ.

ВКП(б) Канаш райкомĕн инструкторĕ.

Кĕрхи тырăсене çуркунне сӳрелесси

Кĕрхи тырăсене çуркунне сӳрелени пит кирлĕ ĕç пулса тăрать. Практика çакна кăтартса парать: çуркунне вăхăтра тата тĕрĕс сӳрелени кĕрхи культурăсен тухăçлăхне чылай ӳстерет. Сăмахран, Комсомольскри сортоучастокра 1940 çулта кĕрхи тулăна çуркунне икĕ йĕрпе сӳрелесе гектартан 17,8 центнер тырпул туса илнĕ.

Кĕр тата хĕл вăхăтĕнче кĕрхи тырă акнă çĕр хытă пусăрăнать. Юр айĕнчен вара хăйĕн кăпăшлăхне çĕтернĕ, пусăрăннă тăпра тухать. Тăпра типнĕçемĕн унăн тусанлă пайĕсенчен хытă сий пулса каять. Çакна пула тăпра хăвăрт типме пуçлать. Çавăн пекех тата вăл ӳсен-тăрансен тымарĕсем патне сывлăша кĕме те чăрмантарать. Çирĕпленсе хытнă тăпрана типме малалла та чармасан, вăл çуркаланма тытăнать. Çавăнпа та ĕнтĕ, кĕрхи тырăсем акнă тăпран çиелти пайне çуркунне сӳрелемелле.

Çуркунне сӳрелени кĕрхи культурăсене ӳсме пит лайăх условисем туса парать. Сӳрелесен, хытă сий пулассине чарса лартнипе пĕрлех, тăпра кăпкаланса юлать. Çавăн пекех тата нӳрĕ пăсланса пĕтесси нумай чакать, ӳсен-тăрансен тымарĕсене сывлăш çăмăллăн лекме пултарать.

Кĕрхи тырăсене çуркунне хăш вăхăтра сӳрелесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сӳрелеме тытăнас чух пĕтĕм лаптăк хатĕр пуласса кĕтме кирлĕ мар, кушарах панă юрăхлă вырăнсене суйласа илсе сӳрелемелле. Çĕр ытлашши нӳрлĕ чух сӳрелеме юрамасть, мĕншĕн тесен, тăпрана ватас вырăнне сӳре пылчăкпа вараланса пĕтет кăна, кун пек чух уйра шултра муклашкасем пулаççĕ. Паллах ĕнтĕ, ку вăл тăпра йăлтах типсе хытса ларичченех сӳрелеме юраманнине пĕлтермест. Ытлашши типнĕ тăпрана сӳре ватаймасть тата ӳсен-тăрана нумай тăпăлтарса кăларать.

Кĕрхи тырăсене çуркунне сӳрелессине, правило пекех, иртерех, тăпра хатĕр пулсанах, туса ирттермелле. Сӳрелемелли чи лайăх вăхăта çак паллăсем кăтартса параççĕ: тăпра сӳре шăлĕсем çумне çыпăçмасть, сӳре шăлĕпе вĕтĕ муклашкасем çăмăллăнах ванаççĕ, вăл муклашкасем сӳре шăлĕсем хушшипе капланса сĕтĕрĕнсе пымаççĕ, ванса юлаççĕ. Сӳре тăпрана 3—4 сантиметр тарăнăшне çити пĕр тикĕс кăпкалатса пырать.

Сӳреленĕ чух чирлĕ тата хăрнă ӳсен-тăрансем тăпăлса тухаççĕ, симĕс çулçăсен пĕр пайĕ тăпрапа витĕнсе юлать, çавăнпа та сӳреленĕ лаптăк малтанхи кунсенче хура тĕслĕн курăнать. Кунтан хăрама кирлĕ мар. Сӳреленĕ çĕр çинчи тырпулсем сӳрелемен ни çинчинчен хăвăртрах вăйă илсе вăйлăн ӳсме тытăнаççĕ.

Сӳрелеме тимĕр, йывăç сӳресемпе усă курмалла. Сӳрелессе акнине урлă сӳрелемелле. Лайăх хунама ĕлкĕрнĕ кĕрхи тырăсене икĕ хут, начартараххисене — пĕр хут сӳрелес пулать. Миçе хут сӳрелесси тата тăпра мĕнлинчен те килет. Тăпра пит хытă пусăрăннă пулсан, икĕ хут сӳрелеме лекет, кăпăшка тата çăмăл тăпрана пĕр хут сӳрелесен те çитет.

Агроном **В. ОРЛОВ.**

Парти Çĕрпӳ райкомĕн бюровĕнче

Парти райкомĕн апрелĕн 16-мĕшĕнче пулнă бюро ларăвĕнче райпотребсоюз, районри сывлăха сыхлав пайĕ тата ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ çураки вăхăтĕнче ĕçлес тĕлĕшпе тунă плансене пăхса тухса çирĕплетрĕç.

Райпотребсоюз çураки вăхăтĕнче колхозниксем ĕçленĕ çĕрте тавар сутса çӳреме план тунă. Вăл плана сельпосенчи работниксем хушшинче сӳтсе явнă. Таварсем сутса çӳреме вырăнсенче 8 лаша уйăраççĕ. Кунсăр пуçне 27 тĕлте таварсене ал вĕççĕн сутса çӳремелле. Урапа маçĕ, пирус, махорка, сахăр çителĕклĕ кӳрсе килнĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр таварсене кирлĕ чух лĕ кӳрсе килменнине палăртмалла. Сăмахран акă, урапа кустăрмисене 100 стан вырăнне 10 стан çеç кӳрсе килнĕ, тавар тикĕчĕ, смала пĕртте хатĕрлемен. Парти райкомĕн бюровĕ райпотребсоюз правлени председательне Софронов юлташа куллен кирлĕ пур таварсене те çак кунсенчех илсе килсе çитерме хушрĕ.

Çуракинче ĕçлекен колхозниксене медицина енĕпе пăхса тăма мĕнле хатĕрленни çинчен сывлăха сыхлав пайĕн заведующийĕ Сайгушкин юлташ каласа пачĕ. Çураки вăхăтĕнче виçĕ колхозра ача яслисем ĕçлемелле. Районри пур колхозсенче те, трактор бригадисенче те аптечкăсем тытса тăма палăртнă. Кашни колхозрах санитари уполномоченнăйĕсем пулмалла.

ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ агитациллĕ-массăллă ĕçсем ирттерме палăртнă. Калаçакан кино район тăрăх виçĕ маршрутпа тухса каймалла.

Çĕрпӳ. (Хамăр корр.).

«Красноармеец» колхоз (Калинински р.) ку тариччен вĕрен-пăявсене яланах сутăн илнĕ пулсан, халĕ вĕсене колхозрах хатĕрлеççĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 75 çулхи колхозник **Д. М. Матвеев** урхалăх явать.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Пахча-çимĕç бригадисенче хĕрӳллĕ ĕç пырать

ÇĔМĔРЛЕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Чăваш республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксене татăх та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Халь кашни колхозра тенĕ пекех çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать.

Иртнĕ çултипе танлаштарсан, кăçал пахча-çимĕç бригадисем те хатĕрленӳ ĕçне анлăн туса пыраççĕ. Вĕсем пурте пĕр-пĕрипе социализмлă ăмăртăва тухнă. Кашни бригада хăй çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласшăн кĕрешет.

Кăмаша ялсоветĕнчи «Волга» колхозăн кăçал тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем 10 гектар çинче туса илмелле. Ку колхоз иртнĕ çулта чылай çимĕçсем туса илчĕ. Кăçал вăл татах та пысăкрах тĕслĕхсем кăтартассишĕн кĕрешет. Паянхи куна пахча çимĕç лартса тумалли çĕр лаптăкĕ çине 82 лав тислĕк тăкнă тата 4 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 6 центнер кĕл хатĕрленĕ. Вăрлăхсем пур культурĕсем тăрăх та çителĕклĕ. Кунсăр пуçне тата колхоз иртнĕ кĕркунне вăрлăхлăх столовăй кăшманĕ 400 центнер, выльăх кăшманĕ 100 центнер, купăста туни 250 штука т. ыт. те хăварнă.

Çак ĕçе ку колхозра пĕтĕмпех пахча-çимĕç бригади туса пырать. Бригадир Ксенцов пахча-çимĕç тăвас ĕçе уйрăмăнах пысăк вырăна хурать, уншăн ку ĕç чи юратнă ĕç пулса тăрать. Колхозра халĕ сухан, помидор, купăста ӳсет. Симĕс сухан туса сутма пуçлани ĕнтĕ уйăх ытла иртрĕ.

«14 лет Октября» колхозра пахча-çимĕç бригадинче 16 çын, вĕсене 3 звенона уйăрнă. Кăçал пахча-çимĕçсем 15 гектар çинче туса илме палăртнă. Çав çĕр çине ку тариччен 640 лав тислĕк, 400 лав фекали турттарса кăларнă. Кунсăр пуçне чăх-чĕп тислĕкĕ 3 центнер, кĕл 4 центнер хатĕрленĕ, вăрлăхсем те кирлĕ чухлех пур. Нумаях та пулмасть икĕ сортлă помидор тата купăста акнă, вĕсем лайăх ӳсеççĕ. Колхозăн 260 рамăран тăракан парник пур.

Егоркино ялсоветĕнчи «Комбайн» тата «Большевик» колхозсенче те пахча çимĕç бригадисем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрленĕ, звеносем тунă т. ыт. те. Сăмах майĕн «Большевик» колхозра сад тăвас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленине те палăртмалла. Кунта пĕтĕмпе 8 гектар çине улмуççисем лартнă, вĕсем лайăх çитĕнеççĕ. Сад йĕритавра карта тытнă. Сад вырăнне кăçал кăна 800 лав тислĕк кăларнă.

Анчах, уйрăм колхозсем пахча-çимĕç тăвас ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Сăмахран, Мыслец ялсоветĕнчи «Ударник» колхоза илсе кăтартма пулать. План тăрăх колхозăн тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем 10 гектар çине лартмалла. Паянхи кун тĕлне колхозăн вăрлăх та çителĕксĕр, парниксене йĕркене кĕртмен, вĕсене тасатман. Çĕр лаптăкĕ çине пĕтĕмпе те 6 лав тислĕк кăна тăкнă.

Пахча-çимĕçсем питех те пысăк тупăш параççĕ. Уйрăм колхозсем иртнĕ çулта пахча-çимĕçсем сутса вуншар пин тенкĕ тупăш илчĕç. Кăçал ĕнтĕ вĕсем пахча-çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлесе татах та пысăкрах тупăш илессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсемшĕн паллă ĕнтĕ—ĕçĕн ăнăçлăхĕ пĕтĕмпех çимĕçсене вăхăтра лартса, акса хăварнинчен, вĕсене çу каçичченех лайăх пăхса тăнинчен килет.

Кашни колхоз, бригада, звено социализмлă ăмăртăва сарса пырса лайăх результат кăтартма пултарать. Çавна пирĕн пурнăçламаллах.

Е. ЕФРЕМОВ.
Çĕмĕрле районĕн çĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Устав—ялхуçалăх артелĕн законĕ, ăна пăсмалла мар

Ялхуçалăх артелĕн уставĕ ялта çĕнĕ общество тумалли тĕп закон пулса тăрать. Вăл закона, уставра çырса хунисене, никам та хăй ирĕкĕпе пăсма пултараймасть.

Ялхуçалăх артелĕн уставне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыни колхоза хуçалăхпа организацилĕх енчен çирĕплетсе пыма, колхозсене пурне те большевикла колхоз тума пулăшать.

Колхоз строительствине çирĕплетсе пырас çĕрте ялхуçалăх артелĕн уставĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнче» çапла каланă: «Ялта татăкланах колхоз стройĕ çирĕпленнĕ. Ку ĕçе 1935 çулти февральте колхозник-ударниксен II-мĕш съездĕнче йышăннă ялхуçалăх артелĕн уставĕ тата колхозсем çумне хăйсем ĕçлесе тăракан пĕтĕм çĕре ĕмĕрлĕхе усă курма çирĕплетни вăйлăн пулăшнă».

Устава йышăнса çирĕплетнĕренпе ултă çул иртрĕ. Уставра çырса хунисене чылай колхозсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Колхоз строительствинче тунă пысăк çитĕнӳсем, тырпул тухăçне, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес çĕрте тунă улшăнусем, ĕç дисциплинине çирĕплетсе пыни тата колхоз хуçалăхĕн тупăшĕ ӳсни—çаксем пĕтĕмпех ялхуçалăх артелĕн уставне пăхăнса, ăна çирĕппĕн пурнăçласа пынинчен килнĕ.

Партипе совет правительстви ялхуçалăх артелĕн уставне кашни колхозăн çирĕп пăхăнса, пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пымалли çинчен пĕрре кăна мар кăтартса панă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах, СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1938 çулти апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановлени пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Апла пулсан та, пирĕн республикăра ялхуçалăх артелĕн уставне пăснă тĕслĕхсем пур-ха. Организацисемпе уйрăм çынсем устава пăсни—вăл уставра кăтартнисене тĕплĕн пĕлменнинчен килет, тепĕр чухне тата ăна пĕле-тăркачах пăснисем те пулаççĕ.

Иртнĕ 1940 çулта ялхуçалăх артелĕн уставне пăсса колхозран тĕрĕс мар кăларнисем, колхоз çĕрне тĕрĕс мар тытса илнисем, колхозсенче ĕçкунĕсене ытлашши салатса пĕтернисем, колхозăн пайланман фончĕсене тултараймаснисем, колхозниксем çине штрафсем тĕрĕс хуманнисем те пулнă.

Ялхуçалăх артель уставĕн 12-мĕш статьинче кăтартнă тăрăх, колхозсем кашни çулах укçа-тенкĕ тупăшĕнчен пайланман фондсене тултарма укçа уйăрса хăвармалла. Çак фонда уйăрнă укçа-тенке членсем хушшинче валеçме тата администрацие хуçалăх енĕпе усă курма юрамасть. Пайланман фонда уйăрса хунă укçана колхозăн ялхуçалăх банкĕн отделенинче ятарласа уçнă счетра тытмалла тата ăна строительство ĕçĕнче, çуртйĕрсене тĕпренех юсас, строительство материалĕсем, ĕç выльăхĕсем тата ăратлă выльăхсем туянас, ялхуçалăх машинисене юсас тата çĕнĕрен туянас çĕрте çеç усă курмалла. Анчах çакна пирĕн республикăри хăшпĕр колхозсем пăхăнса тăмаççĕ.

Сăмахран, Çĕрпӳ районĕнче Чапаев ячĕпе тăракан (Çĕньял ялсовечĕ), «Красный Октябрь», «Клим Ворошилов» (Тутарла-Кăнаш ялсовечĕ) колхозсем 1939—40 çулсенче пайланман фондсене тĕрĕс мар салатса пĕтернĕ. Районри 182 колхозран 15 колхозра пайланман фонда укçа-тенкĕ тупăшĕнчен 12 процент кая уйăрса хăварнă. Янзакасси ялсоветĕнчи «Путь Ленина» колхозра 5,9 процент, Чурачăк ялсоветĕнчи «Радио» колхозра 6 процент, Шĕнер ялсоветĕнчи «Глиссер» колхозра 8 процент çеç уйăрнă т. ыт. те.

Ялхуçалăх артель уставĕн 17-мĕш статьинче колхозниксем çине хумалли взысканисем çинчен каланă. Устав хушнă тăрăх, ĕç дисциплинине пăсакан колхозниксене, ĕçе пахалăхсăр тунă пулсан, ăна ĕçкунĕ памасăр тепĕр хут тутармалла, асăрхаттармалла, выговор памалла, пухура ятлама лартса ятламалла, пилĕк ĕçкунĕ таран штраф хумалла, пĕчĕкрех ĕçе лартмалла.

Çаксене çирĕп пăхăнса пымалла ĕнтĕ. Колхозниксем çине çӳлте асăннă взысканисене тĕрĕс хуни дисциплинăна пăсакан колхозниксене воспитани парас, колхозри дисциплинăна çирĕплетес çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çапах та, хăшпĕр колхозсенче вĕсене уставра хушнă пекех тумаççĕ, час-часах ку тĕлĕшпе те устава пăсаççĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан (Калинински р.) колхозра 1941 çулти январĕн 4-мĕшĕнче правлени ларăвĕнче «вите тăрăхне начар витнĕшĕн» колхозниксен пĕтĕм ĕçкунĕнчен 50 процентне тытса юлмалла тунă. Çав колхозрах иртнĕ çулта, улма кăларма тухман колхозниксенчен пĕрер пăт тыррăн тытса юлмалла тунă.

Кĕçĕн-Кăкшăмри «Красный кавалерист» колхозра чăх-чĕп фермине комплектовать тăвас енĕпе устава пăснă пулнă.

Çавăн пекех, колхозран кăларас енĕпе те устава пăснисем пулнă. Злобинскри «Правда» колхоз правленин (Кувакино р.) 1941 çулти февралĕн 17-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче, тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех, пĕр харăсах 60 хуçалăха колхозран кăларса пăрахнă. Районри прокурор протест панă хыççăн райсовет исполкомĕ вăл решенине пăрахăçа кăларнă.

Çак фактсем вĕсем хăшпĕр уйрăм колхозсемпе вырăнти советсен руководителĕсем хăйсем ялхуçалăх артелĕн уставне тĕплĕн пĕлменни, çĕрĕç оргăнĕсем енчен контроль туса тăрасси çителĕксĕрри çинчен калаççĕ. Çавăнпа та, колхоз тата вырăнти советсен руководителĕсем хушшинче ялхуçалăх артель уставне тĕплĕн вĕренес ĕçе организацилени кирлĕ. Колхозниксене уставпа тĕплĕн паллаштармалла. Мĕншĕн тесен, ялхуçалăх артелĕн уставĕ вĕсемшĕн куллен пăхăнса ĕçлемелли обязательнăй закон пулса тăрать. Унсăрăн вĕсем колхоз строительствипе çыхăннă ыйтусене тĕрĕс татса пама пултараймаççĕ.

Ялхуçалăх артелĕн сталинла уставне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пырассишĕн кĕрешесси—прокуратура тата çĕрĕç оргăнĕсен хисеплĕ те ответлă задачи. Вĕсен çак задачăна чыслăн пурнăçласа пымалла. Устава пăсакан, айăплă çынсене вăхăтра тата тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

П. АЛЕКСЕЕВ.
Чăваш АССР прокурорĕн помощникĕ.

Колхоза кĕреççĕ

Пирĕн республикăри колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине колхозсенче тата единоличниксем хушшинче анлăн сӳтсе-яваççĕ. Çакăн хыççăн единоличниксем колхоза кĕме тытăнчĕç.

Çак кунсенче Тĕмерти Смидович ячĕпе тăракан колхоза (Тăвай р.) 6 хуçалăх, Уйкас Кибекри Тельман ячĕпе тăракан колхоза (Шăхасан р.) 5 хуçалăх, Кавалти «Маяк» колхоза (Вăрмар р.) 5 хуçалăх кĕчĕç.

Колхоза кĕрекенсен йышĕ Çĕрпӳ районĕнче те ӳссе пырать. «Красная Павария» колхоза 11 хуçалăх, «Вучах» колхоза 2 хуçалăх хутшăнчĕç. Халĕ вĕсем колхозра активлăн ĕçлесе пыраççĕ.

Шупашкарти эрех заводĕнчи стахановка-комсомолка **В. В. Лукоянова** хатĕр продукцине тĕрĕслет.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Пурне те вĕрентмелле

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкасси, Упакасси, Анатри-Макаç, Кайри Шĕнерпуç тата Юртукасси ялсовечĕсенче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене пурне те вĕренĕве явăçтарнă. Çавăн пекех Уракăвăри вăтам шкулти, Пĕчченхырти пуçламĕш шкулти учительсем хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçе аван йĕркелесе янă. Пĕчченхырти пуçламĕш шкул заведующийĕ Михайлов юлташ 1941 çулта 9 çынна вĕрентсе кăларчĕ.

Анчах хăшпĕр ялсоветсенче хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕç çине кирлĕ пек çавăрănса пăхмаççĕ-ха. Астакасси, Пуснаркасси, Кукашне тата Амачкино ялсовечĕсенче вĕрентме тивĕçлисенчен çуррине ытларах кăна вĕренĕве хутшăнтарнă.

Астакасси ялсоветне илсен, унта хутла пĕлменнисем 29 çын, сахал пĕлекенсем 15 çын пур. Вĕсенчен нумайĕшĕ халĕ те вĕренмеççĕ. Ку ялсоветĕнче туллимар вăтам шкул тата икĕ пуçламĕш шкул ĕçлеççĕ. Çак шкулсенче пурĕ 14 учитель. Тата вулав çурчĕн заведующийĕ, медицина работникĕсем тата комсомолецсем те чылай. Вĕсем хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕç çине сахал çавăрăнса пăхаççĕ. Вĕрентме çирĕплетнĕ учительсем, Архиповпа Трифонов юлташсем, халĕ те вĕрентме пуçламан-ха. Астакасси ялсовет исполкомĕн председателĕ Сергеев юлташ та ку ĕç çине çавăрăнса пăхмасть. 1940 çулта ялсовечĕ хăйĕн смети тăрăх çитĕннисене вĕрентме 400 тенкĕ уйăрса хунă пулнă. Ку укçан пĕр пусĕпе те усă курман.

Кун пек çитменлĕхсене пĕтерме, хутла пĕлменнисене тата сахал пĕлекеннисене пурне те кĕрешĕве явăçтарма тахçанах вăхăт.

К. ЕФИМОВ.

Çĕнĕ цех уçнă

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Ширшов ячĕпе тăракан артельте çак кунсенче тата тепĕр цех ĕçлеме пуçларĕ. Унта ача-пăчасем валли вылямалли пуканесем тăваççĕ. Кăçал унăн план тăрăх 10 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла.

Пуканесем тăвакан цеха çамрăк работница Гущина юлташ ертсе пырать. Вăл кăçал ятарласах курсран вĕренсе тухрĕ.

Çĕнĕ цех организациленисĕр пуçне артель правленийĕ скупочнăй магазин уçрĕ. Унта кивĕ япаласене юсаса лайăхлатса сутаççĕ.

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăхсен продуктивлăхне ӳстерессишĕн

Кăçалхи март уйăхĕнче партипе правительство питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăракан икĕ постановлени кăларчĕç, вĕсем иккĕш те пĕр-пĕрипе тачă çыхăнса тăраççĕ. Пĕрремĕш постановлени — «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен», тепри — «Хуратăпраллă мар тăрăхри колхозсенче тата совхозсенче тĕрĕс пусуçаврăнăшсем тăвасси çинчен».

Колхозсем çак икĕ постановленине те çавтери пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Колхозри кашни ĕçех халь унăн тухăçлăхĕпе ăнăçлăхĕ тăрăх хакланать. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне е выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартма пултарнă колхозниксене, малалла, колхозăн социализмлă харпăрлăхне ӳстерме тăрăшман колхозниксенчен ытларах тӳлеççĕ.

Иккĕмĕш постановлени пĕрремĕшне пурнăçа кĕртмелли никĕс туса парать. Чăнахах та, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тĕрĕс пусуçаврăнăшсемсĕр ӳстерме пулать-и-ха? Выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ун валли апат хатĕрлемесĕр ӳстерме пулать-и? Паллах, çук.

Пусуçаврăнăшĕ — пит кирлĕ агротехникăллă мероприяти, унсăрăн вăйлă тырпул туса илесси çинчен шухăшлани усăсăр. Çакна иртнĕ вăхăтсенче пулнă виçĕ уйлă пусă та лайăх çирĕплетсе парать. Унчухне хресченсем ялхуçалăх культурисене çителĕклĕ туса илеймен. Кунта, паллах, урăх сăлтавсем те пулнă. Патша влаçĕн тата помещиксемпе кулаксен тискер пусмăрĕ, çĕр сахал пулни, агрономи пĕлĕвĕ пулманни т. ыт. те тырпул тухăçлăхне ăнăçлă ӳстерме май паман. Виçĕ пусу та нумай чăрмавсем кӳнĕ.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешнĕ çĕрте тĕрĕс пусуçаврăнăшĕ пит кирлĕ вырăн йышăнса тăрать. Вăл тăпра çимĕçлĕхне ӳстерет, уйхирĕ çумкурăксенчен тасатма пулăшать, удобренисене нумай тăкакламасăр пысăк тухăçлă тырпул туса илме, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлеме май парать.

Партипе правительство хуратăпраллă мар тăрăхри колхозсем умне, çав шутах пирĕн республика та кĕрет, тырпула аякран кӳрсе килессине пĕтерсе, тырпула вырăнтах, хамăр патрах, ытлашшипех туса илес задача лартрĕ. Çакна тума пур майсем те пур. Хуратăпраллă мар тăрăхра нумай тĕрлĕ тăпрасем тĕл пулаççĕ, вĕсем çинче тырпула ӳстерме кирлĕ условисем пурте çителĕклĕ. Пысăк тухăçлă тырпул туса илме кунта, паллах, удобренисем ытларах кирлĕ. Эпир пĕлетпĕр, пирĕн Союзăн минераллă удобренисем туса кăлармалли сырье вĕçĕ-хĕррисĕр нумай, эпир удобренисемпе çулсерен ытларах та ытларах усă курма пултаратпăр. Унсăр пуçне тата вырăнти удобренисене те асра тытмалла, вĕсене хакламасăр тăма юрамасть. Çакна та хушмалла: хире нумай çул хушши ӳсекен курăксене акнипе тăпра лайăхлансах пырать. Хуратăпраллă мар тăрăхри метеорологи условийĕсем те вăйлă тырпул туса илме май параççĕ: нӳрĕ çителĕклĕ, ӳсен-тăрана ӳсе çитĕнме кирлĕ вăхăт нумай культурăсемшĕн çителĕклĕ. Чылай культурăсем, иртнĕ вăхăтпа танлаштарас пулсан, çурçĕр еннелле куçса пыраççĕ. «Кăнтăрти» культурăсем тесе шутланакан кукуруза, соя, сахăр кăшманĕ, Италире çитĕнекен кантăр т. ыт. те хуратăпраллă мар тăрăхри районсенче лайăххах ӳссе çитĕнекен пулчĕç. Уйрăмах кунта кĕрхи тата çурхи тулăсене акса тума пур майсем те çителĕклине палăртмалла. Халиччен вĕсене хуратăпраллă мар тăрăхра ӳсме пултараймаççĕ, тесе шутланă. Ку тĕлĕшпе тăшманла теори те («белое пятно») çӳренĕ, вăл «теори» тăрăх тулăна хуратăпраллă мар тăрăхра акса тума юраман, ун валли кирлĕ условисем çук, тенĕ.

Колхозсем çак сиенлĕ «теорие» часах сирсе пăрахрĕç, вĕсем хуратăпраллă мар тăрăхри районсенче те пысăк тухăçлă тулă туса илме тытăнчĕç. Çаксем пурте тулăн çурçĕрти базине тăвас задачăна кăларса тăратма майсем туса пачĕç. Кăна эпир акакан культурăсен хисепне чакарса мар, ахаль выртакан çĕр лаптăкĕсемпе усă курса: шурлăхлă вырăнсене типĕтсе, катасем йышăнса тăракан вырăнсене тасатса т. ыт. майсемпе туса пыратпăр.

Хуратăпраллă мар тăрăхри районсем пирĕн государствăна çавтери лайăх йĕтĕн сӳсĕ параççĕ. Йĕтĕн-долгунеца çитĕнме ку тăрăхра лайăх условисем пур, çавăнпа та унăн сӳсĕ пысăк пахалăхлă пулать. Анчах йĕтĕн хăйне тăрăшса пăхма хушать, ăна акма палăртнă çĕр çинче ун умĕн хăйне кирлĕ культура пулмалла, кăна нумай çул ӳсекен курăксем акакан тĕрĕс пусуçаврăнăшсене тусан çеç пурнăçлама май пур.

Выльăх-чĕрлĕх валли тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсемсĕр çителĕклĕ апат хатĕрлеме çук.

Тĕрĕс пусуçаврăнăшсене мĕншĕн кĕртни çинчен постановленире çапла каланă: «Хуратăпраллă мар тăрăхри ялхуçалăхне çĕклентересси не малалла хăвăртлатас тесе, тăпран çимĕçлĕхне пысăклатас тесе, тырпул тухăçлăхне ӳстерес тата хуратăпраллă мар тăрăхри колхозсемпе совхозсенчи йышлансах пыракан выльăх-чĕрлĕхсене валли апат бази çирĕп пулмалла тăвас тесе», кĕртнĕ тенĕ.

Пусуçаврăнăшĕсем çинчен кăларнă постановленине чăннипех пурнăçлас тесе, Сталин юлташ ВКП(б) XVII съездĕнче каланине аса илмелле. Вăл çапла каланă: «Çак тырра аякран илсе тăракан тенĕ тăрăхра вĕтлĕхсемпе витĕннĕ çеремлĕ çĕрсем 5 миллион гектара яхăн пур. Паллă ĕнтĕ, çак тăрăхра çанталăк япăх мар, çăмăр та сахал мар çăвать, уяр çанталăксем пулмаççĕ. Çак çĕрсене вĕтлĕхсенчен тасатса хăшпĕр организациллĕ ĕçсем туса ирттерсен, тĕштырăсем акса тумалли пит те пысăк район туса хума пулать, вăл вара, çак вырăнсенче тырпул тухăçĕ яланах пысăк пулнă пирки, таварлă тырă халĕ Анатри Атăл е Вăтам Атăл панинчен те сахал мар туса тăма пултарать».

Халиччен сухаламан çĕрсемпе çителĕксĕр усă курни çинчен палăртмалла. Пирĕн Чăваш республикинче начар çĕрсем тесе сухалама пăрахнă вырăнсем чылай, вĕсемпе усă курмаççĕ, усă курнă чух та тухăç сахал илеççĕ. Колхозсем вĕсемпе лайăх тата пĕлсе усă курсан, акакан çĕр лаптăкне тата колхозсен доходноçне ӳстернĕ пулнă пулĕччĕç.

Çĕнĕ çĕрсемпе усă курни, нумай çул ӳсекен курăксем акакан тĕрĕс пусуçаврăнăшсем кĕртни, удобренипе тата малта тăракан агротехникăпа усă курни, акакан культурăсен ассортиментне ӳстерни, — çаксем тырпул тухăçлăхне ӳстерме пысăк майсем туса параççĕ.

Пусуçаврăнăшсем кĕртесси çак тариччен Чăваш республикинче те, хуратăпраллă мар тăрăхри ытти районсенчи пекех, çителĕксĕр пулса пынă. Пусуçаврăнăшсене çирĕп туса хатĕрлемениине пула тырпулсем черетленсе акăнса пырассине тĕрĕс тытса пыман. Çавăнпа вара хăшпĕр колхозсенче нумай çул ӳсекен курăксем аксан та çитĕнмесĕрех пĕтнĕ, вăл курăксенчен колхозниксем çителĕклĕ усă кураймаи. Кунсăр пуçне тата клеверпа люцерна вăрлăхĕсем çителĕксĕр пулни çав усăсăр тесе шутланă çĕрсен лаптăкне пĕчĕклетме кансĕрленĕ. Çаксем нумай çул ӳсекен курăксем акакан пусуçаврăнăшсене кĕртме сахал мар чăрмантарнă. Ку тариччен усă курнă хăшпĕр пусуçаврăнăшсем пит кăткăс пулнă. Акă, тĕслĕхрен, Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозах илер. Культурăсен черетленĕвĕ пит кăткăс пулнă пирки ку колхоз 1939 çулта çĕнĕ пусуçаврăнăш çине куçнă. Хăшпĕр колхозсенче тата икшер пусуçаврăнăшĕ те пур, ăна та ĕнтĕ питех ырлама кирлĕ мар. Тĕрĕс пусуçаврăнăшсем кĕртесси çинчен кăларнă постановленире «кашни колхозра, правило пекех, уйхирти пусуçаврăнăш пĕрре пулмалла», тесе паллă тунă.

Кантăр, каучуконоссем е махорка чылай акакан колхозсенче çеç ятарласах тунă пусуçаврăнăшсем пулма пултараççĕ. Пирĕн республикăра ятарласа тунă пусуçаврăнăшсемпе кантăр тата махорка аталаннă районсенче усă курма пултараççĕ. Юлашкинчен çакна паллă тăватпăр, утă çулса илмелли вырăнсем нумай колхозсенче курăк акма палăртман пусуçаврăнăшсем пур. Анчах, улăх-çарансем пурри уйхирте курăксем акса тăвассине кансĕрлемелле мар, мĕншĕн тесен нумай çул ӳсекен курăксем тăпрана çĕнетсе лайăхлатма, унăн çимĕçлĕхне пысăклатма тата çумкурăксене пĕтерме пулăшаççĕ.

Нумай çул ӳсекен курăксемпе анлăн усă курманни постановленире пит усăмлăн курăнса тăрать. 1-мĕш параграфри «г» пунктра кăна хăйăрлă çăмăл тăпраллă колхозсенче курăк акмалла мар пусуçаврăнăшсем тума кирли çинчен каланă, кунта çĕртме пуссинче люпин акассине анлăн сарса ямалла. Каланисене шута илсен, курăк акма палăртман пусуçаврăнăшсене пăхса тухма кирли тухса тăрать, тен хăшпĕр çĕрте вĕсене улăштарма та лекет.

Нумай çул ӳсекен курăксене акасси, постановленире каланă тăрăх, пучахлă тырăсен айне акас енĕпе пулса пымалла. Чăваш республикинче вара курăксене хăйсем тĕллĕн кăна акас туртăм пурри сисĕнет.

Пирĕн нумай колхозсенче клевера тимофеевкăпа хутăштармасăр акаççĕ. Çакна çаплах кирлĕ тесе шутлаççĕ пулас, çавăнпах та пулĕ, хатĕрлев организацисем тимофеевка вăрлăхне кӳрсе те килмеççĕ, Шупашкарти госсортфондра ăна сайра-хутра та тĕл пулма хĕн.

Постановленире клевера тимофеевкăпа хутăштарса акасси çинчен тӳррĕмех каланă, сăмах унта клевера хăй тĕллĕн акасси çинчен мар, нумай çул ӳсекен курăксене акасси çинчен пырать. 1-мĕш параграфăн «а» пунктĕнче: «...тимофеевкăпа хутăш акнă клевер уйĕсем 2 таран» пулмалла, тенĕ.

Çĕрулмине, постановленире каланă пек, «правило пекех, кĕрхи культурăсем хыççăн клевер пулнă тата пăрça йышши культурăсем пулнă вырăна лартмалла». Ку унăн тухăçлăхне ӳстерме пулăшать. Калас пулать, хальхи вăхăтра çĕрулми тухăçлăхĕ питех те пĕчĕккĕ. Ку ĕнтĕ агротехникăна начар пурнăçласа пынинчен çеç мар, çавăн пекех çĕрулмине кĕрхи культурăсемпе черетленекен пĕрчĕллĕ çурхи тырăсем хыççăн акнинчен те килет. Халь усă куракан пусуçаврăнăшсене пăхса тухнă чух кăна асра тытас пулать.

Вăрлăхсем çителĕклĕ пулманни тата вăрлăхлăх акнă вырăнсем пĕчĕк тухăç пани нумай çул ӳсекен курăксем акассине пысăк чăрмавсем кӳнĕ. Малалла курăксен вăрлăхĕсене çителĕклĕ тăвасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Хуратăпраллă мар тăрăхри колхозсенче тата совхозсенче тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсем тăвасси çинчен» йышăннă постановлени ку тĕлĕшрен анлă программа пулса тăрать. Вăл пусуçаврăнăшĕсем кĕртессине кăна мар, колхозсемшĕн пысăк вырăн йышăнакан тата ытти мероприятисене пурнăçа кĕртессине те шута илет.

Чăваш республикинче торф нумай, унпа усă курасси çулран-çул ӳссе пырать, анчах та вăл эпир унпа çителĕклĕ усă куратпăр тенине пĕлтермест. Унăн усăлăхне ӳстерес шутпа ăна выльăхсен айне ытларах сарса памалла, фекалипе хутшăнтарса компост тумалла.

Постановлени çырла лартакан вырăнсемпе садсен вырăнĕсене аслăлатма хушать. Ку ĕçе тума та майсем çителĕклĕ.

Çĕрĕç оргăнĕсемпе колхозсен çак постановленине асра тытса ĕçлемелле, ăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла.

Тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсем тăвасси çинчен ССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă постановленине пурнăçласа пырса, орденлă Чăваш республикинчи колхозсем тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес ĕçре татах çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕç.

Л. ПЕЛЬЦИХ.
Чăвашсен Ялхуçалăх Институтĕн профессорĕ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Грецири фронтра Англипе Греци войскисем çĕршывăн кăнтăр пайнелле чакса пыраççĕ. Германи командованийĕн сводкинче çапла пĕлтернĕ: Германин Пинд тăвĕсем урлă хĕвеланăç еннелле наступлени туса пыракан войскисем Янина хулине çитнĕ (Хĕвелтухăç Грецире), Ларисса урлă кăнтăр еннелле малалла кайса, Ламия хулине туртса илнĕ (Кăнтăр Фессалире). Германи войскисем çавăн пекех тата портлă Волос хулине (Грецин хĕвелтухăç çыранĕнче) туртса илнĕ. Греци сводкинче çапла каланă: Греци вăйĕсене оборонăн çĕнĕ позицийĕсем çине куçарас ĕç пĕтĕмĕшпех ăнăçлăн пулса иртнĕ. Англи войскисем, тенĕ Англи сводкинче, Ламия патĕнчен кăнтăр енче оборона позицийĕсене йышăнса тăнă.

Рейтер агентствин корреспонденчĕ Каиртан панă пĕлтерӳре Греци войскисем Лариссăпа Триккаларан тухса кайни тĕрĕс пулни çинчен каланă. Çапла пулсан та, тет корреспондент, нимĕçсем союзниксен войскисен линине пĕр пунктра та татса каçайман. Фронтри положени халичченхи пекех йывăр-ха. Германи войскисем малалла кайнă чухне йывăр çухатусем тунă.

Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Грецири фронтăн сулахай флангĕнче те Англин имперски войскисемпе Греци войскисем оборонăн çĕнĕ позицийĕсем патне чакнă. Каялла чакнă чухне вĕсене Австралипе Çĕнĕ Зеланди войскисем хӳтлесе пынă, вĕсем противникăн наступленине чарса тăнă тата ăна пысăк çухатусем кӳнĕ.

Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Итали войскисем пур çĕрте те Албани чикки урлă каçнă, Греци территорийĕ çине шалалла кĕнĕ. Итали авиацийĕ Превеза, Арта, Корфу тата Паксос çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, апрелĕн 20-мĕшĕнче Грецири фронтра Англи авиацийĕ противникăн 16 самолетне персе антарнă. Германи наступлени пуçланăранпа пĕр кун хушшинче противникăнне çакăн чухлĕ самолет персе антарни халиччен пĕрре те пулман-ха. Çак 16 самолетран 14 самолетне Афины тĕлĕнче сывлăшра пулса иртнĕ пысăк çапăçу вăхăтĕнче персе антарнă.

* * *

Англипе Германи хушшинчи фронтра Германи авиацийĕн активлăхĕ палăрать. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, ыран апрелĕн 22-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Плимутри çар порчĕ çине татах тепĕр хут бомбăсем пырса пăрахнă. Кунсăр пуçне Германи авиацийĕ Грейт Ярмут порчĕ çине тата Кăнтăр Англири аэродромсем çине пырса тапăннă. Германин тинĕс çинчи хĕçпăшаллă вăйĕсен операцийĕсем пулса пынă. Англин икĕ суднине путарни çинчен пĕлтереççĕ.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче каçхине, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи самолечĕсем Гаврти доксем çине пырса тапăннă. Ыран апрелĕн 22-мĕш тенĕ чух çĕрле Çурçĕр Францири аэродромсем тĕлĕнче разведкăллă вĕçевсем туса çӳренĕ вăхăтра Англи самолечĕсем Германи бомбардировщикне персе антарнă.

* * *

Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăçпе центральнăй пайĕнче Германипе Итали авиацийĕ Англи суднисен караванĕсемпе опорлă пункчĕсене хирĕç кĕрешни палăрать. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, апрелĕн 21-мĕшĕнче Германи самолечĕсем Англи суднисен икĕ караванне атакăланă, икĕ парохода путарнă тата ыттисене сиен кӳнĕ. Итали авиацийĕн отрячĕсем Суда заливĕнчи (Крит утравĕ) портсен сооруженийĕсем çине тата çав заливра тăракан Англи суднисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Пĕр парохода путарнă. Ыран апрелĕн 21-мĕш тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Германипе Итали авиацийĕн пысăк мар соединенийĕсем Мальта çине пырса тапăннă.

Çурçĕр Африкăра активлă вăрçă ĕçĕсем пулман. Германи сводкинче çапла каланă: англичансен бронетанковăй чаçĕсем Тобрукран тухса атака тума хăтланнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçсăр пулнă. Соллумран хĕвелтухăç енче, тенĕ Итали сводкинче, англичансен пĕр колонни Германипе Итали войскисен позицийĕсем патне çывхарса пыма хăтланнă, анчах ăна каялла хăваласа янă. Апрелĕн 21-мĕшĕнче Англи авиацийĕпе çар карапĕсем Триполи çине бомбăсем пырса пăрахнă тата артиллерирен персе тăнă.

Хĕвелтухăç Африкăра ытларах активлă вăрçă ĕçĕсем Десси секторĕнче (Аддис-Абеба патĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăç енче) пулса иртнĕ. Итали сводкинче каланă тăрăх, Десси районĕнче Англи чаçĕсен атакисене сирсе янă. Англи сводкинче каланă тăрăх вара, Англи войскисем Десси патне пырса кĕмелли вырăнсене хӳтлесе тăракан позицисене туртса илнĕ.

Апрелĕн 22-мĕш. (САСС).

Францири пурнăç

ВИШИ, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Ялхуçалăх министерстви пичетлесе кăларнă сведенисем тăрăх, Францири ялхуçалăхĕнче лартса хăварма кирлĕ çĕрулми вăрлăхĕн 30 процентĕ, кирлĕ чухлĕ химиллĕ удобренисен 25 процентĕ, виноградниксене çемçетме кирлĕ ешĕл сенкерĕн 40 процентĕ кăна пур. Ĕç вăйĕ тĕлĕшпе положени хăрушла начар. Миллион ытла хресченсем — тыткăнра. Вăрçăччен Францири ялхуçалăхĕнче ютçĕршывсенчи ĕç вăйĕпе анлăн усă курнă пулсан, халĕ вăл та çук.

17—21 çулти французсем валли ялхуçалăх повинноçĕ туса хунисĕр пуçне, правительство ялхуçалăхĕнче ĕçлеттерме мобилизаци тăвиччен халĕ пурăнма юраман тенĕ зонăсенче пурăннă, кайран демобилизациленнĕ салтаксене, Эльзаспа Лотарингирен тарнă тата тыткăнран ирĕке тухнă çынсене мобилизацилеме йышăннă.

ВИШИ, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Пичетлесе кăларнă официальнăй цифрăсем тăрăх, хальхи вăхăтра Франция кашни кунах пĕр миллиард франк чухлĕ расход тăвать. Пĕр кун хушшинче тухакан çак расходран 400 миллион франкĕ Германин оккупациллĕ çарне тытса тăнă çĕре каять, 600 миллион франкĕ кулленхи ĕçсене, пуринчен ытларах вăрçăран юлнă сиенсене пĕтерессипе çыхăнса тăракан ĕçсене каять. Вăрçă вăрçнă чухне Франция кашни кун 1.200 миллион франк расходланă.

Цудерос—Греци премьер-министрĕ

АФИНЫ, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС). Грецири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Греци королĕ Эммануэль Цудероса, ютçĕршыв ĕçĕсен министрне, премьер-министр пулма уйăрса лартнă. Цудерос присяга йышăннă. Кабинет составĕ улшăнман.

КĔСКЕН

▲ Çурçĕр Ирландири обществăллă хăрушсăрлăх министерстви çапла пĕлтернĕ: мĕнпур çĕршыв 9 çар округĕ çине пайланать. «Бельфаст» хăйне уйрăм çар округĕ пулса тăрать.

▲ Гибралтар портне Англин 3 линкорĕпе пĕр крейсерĕ пырса çитнĕ. Кунсăр пуçне, Гибралтарта темиçе кун хушши ĕнтĕ Англин «Арк Ройфл» ятлă авианосецĕ, темиçе крейсер, подводнăй лодкăсен флотилийĕ тăрать.

Хирурги пулăшăвне вăйлатассишĕн

Иртнĕ уйăхра Шупашкарта военно-полевой хирурги эрни пулса иртрĕ. Ку ыйту тăрăх хăшпĕр районсенче те докладсем пулчĕç. Военно-полевой хирурги эрни медицина работникĕсем, уйрăмах врачсем умне хирурги ĕçне вĕренес задачăна уççăн кăларса тăратрĕ. Пирĕн Чăваш республикишĕн çак ыйту паянхи кун уйрăмăнах çивĕч тăрать, мĕншĕн тесен, тӳрех калас пулать, хирурги пулăшăвĕ пирĕн республикăра çителĕклĕ вырăнта тăмасть. Врачсен кадрĕсем пирĕн халĕ чылай, анчах хирурги ĕçне туса пыракан больницăсем хуласенче кăна. Районсенчи тата ялти больницăсенче хирургсем çук, çавăнпа вĕсем çынсене çăмăл операцисем тумалла пулсан та хуласене яраççĕ. Сăмахран илер Красноармейскинчи больницăна. Кунта материалсене стерилемелли автоклав ахалех янраса ларать, больницăра пӳрне кассан та çыхма стериллĕ материал çук. Советскинчи больницăра та ĕç çавăн пекех. Стериллĕ материалсене хатĕрлемеллисем çук, пĕр-пĕр çын васкавлă операцине пырас пулсан аптраса ӳкмелле. Хирурги пӳлĕмне тахçанах пĕтерсе хунă. Кусенчен Октябрьск, Муркаш тата ытти больницăсем те аякра тăмаççĕ. Вĕсенче те çынна хирурги пулăшăвне параймаççĕ. Шурут больницине (Первомайски р.) илсен, кунта ĕлĕк операцисем ăнăçлă тунă, инструментсем те çителĕклĕ пулнă. Халĕ вăл пĕтсе ларнă, инструментсем хăшĕ-пĕрисем çухалса пĕтнĕ. Ăнланса илме йывăр мар ĕнтĕ, стериллĕ материалсăр ăçтан вара культурăллă больница пулма пултартăр? Ала касни, татни, ура хуçни тата ытти инкексем сахал пулаççĕ-и? Кашнинчех хулана чупма çук. Тепĕр чух тата вĕсене (сăмахран халь çул пĕтнĕ вăхăтрах) хуласене ăсатма май та килмест. Унтан, çуркуннехи е çуллахи ялхуçалăх ĕçĕсем вăхăтĕнче хирурги пулăшăвне памалли случайсем яланах нумайланаççĕ. Çакăн пек япалана пула хулари больницăсене те питĕ хĕн тивет. Тĕслĕхшĕн Шупашкар больницинех илер. Хирурги корпусне лартни 100 çул ытла иртет ĕнтĕ. Вăл тăвăр, кивĕ, çĕнĕ çитĕнӳсемпе ĕçлеме йывăр. Вырăн çитмен (пурĕ те 40 койка) пирки операци тутарма пыракан çынсене пĕрмаях каялла яма лекет. Сывалма тесе пысăк шанчăкпа пынă çынна час-часах тарăхтарса яни кăна пулса тухать. Çак япала врачсене хăйсене те питĕ тарăхтарать, кӳрентерет. Çапах больницăна аслатас ыйтăва халиччен те çивĕччĕн лартни сисĕнмест. Хулари хăшпĕр медицина учрежденисем валли лайăх, таса, çĕнĕ çуртсем тупăнчĕç пулсан, тахçанхи больницăна çаплипех хăварни, пирĕн шутпа, хирурги ĕçĕ çине çаврăнса пăхманни кăна пулса тăрать. Шупашкар больницине хамăр республикăран кăна мар, Мари республикинчен те (Чикме, Юрино районĕсем) килнине астусан, пушшех паллă пулмалла пек туйăнать ĕнтĕ ку ыйту.

Çакăнта кăтартнă фактсем хирурги пулăшăвне масса çывăхнерех çывхартма хушаççĕ. Ăна пурнăçлас пулсан, кашни больницăрах пĕтĕмпе мар пулин те, пĕчĕкрех тата васкавлăрах операцисене туса пымалла. Сăмахран каласан, ал-ура каснине çĕлеме, шăмă хуçăлнине, сикнине вырăна лартма, тăвăнса хĕсĕнсе ларнă грыжăна, çурăлса кайнă червообразнăй отростока операци тума кашни больницăрах пĕлмелле.

Çак задача пирĕн умма тепĕр ыйту — хирургсем хатĕрлес ыйту кăларса тăратать. Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ врачсене хирурги ĕçне вĕренме кашни çулах усовершенствовани курсĕсене ярса тăрать. Анчах курссем кĕске срокрах хирургсем хатĕрлесе кăлараймаççĕ, теори ыйтăвĕсемпе тата медицинăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кăна паллаштараççĕ. Курсран килнĕ врач хăйне ĕссĕн операци тума шикленет, унăн хăнăху, практика çук. Нумаях пулмасть манăн Советски районĕнчи çавăн пек курса кайса килнĕ пĕр врачпа калаçса пăхма тĕл килчĕ. Вăл чылай стажлă врач, курсра çĕнĕ пĕлӳсем илнĕ. Анчах операци тума хăяймасть, хăй вăл вĕренме тăрăшать, Шупашкарти е урăх çĕрти больницăра пăртак ĕçлесе курасшăн. Шухăш тĕрĕс. Хирурги тĕлĕшĕпе опытлă врач патĕнче унăн пĕр-ик уйăх кăна ĕçлемелле, вара вăл хăй больницинче хăй те хирурги чирĕсене сыватма пултаракан врач пулса тăрать. Хирурги ĕçне, практикине вĕрентме пултаракан больницăсем пирĕн республикăра çук мар. Пирĕн хирурги ĕçĕнче те РСФСР-ĕн тата Чăваш республикин тава тивĕçлĕ врачсем пур, вĕсенчен чылайĕшĕ (Кузнецов, Виноградов тата ыт.) хăйсем те белофинсемпе çапăçнă вăрçăра пулса, военно-полевой хирургин ыйтăвĕсене лайăх пĕлеççĕ. Унтан, Кафтанников (Çĕмĕрле), Покровский (Улатăр) хирурги ĕçĕнче хăйсен мастерлăхне тахçанах кăтартнă хисеплĕ врачсем пулса тăраççĕ. Çакăн пек больницăсем пирĕн 5—6 пур, вĕсем районсенчи тата ялсенчи врачсене хирурги ĕçне вĕрентме те, хăйсен опычĕсемпе паллаштарма та çăмăл пултараççĕ. Шупашкар больницинче çак ĕçе туса пăхнă опыт пур, вăл халăх сывлăхне упрас ĕçре пысăк усă кӳнине çеç кăтартса парать. Мĕнпур ĕç кунта организаци ыйтăвĕ çинче çеç тăрать. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе кашни районранах хирургипе интересленме шутлакан врачсене опытлă хирургсем патне вĕренме ярса тăмалла.

Хирурги пулăшăвне парас ĕçре операционнăй сестра вырăнĕ те питĕ пысăк, мĕншĕн тесен материалсем хатĕрлесси пĕтĕмпех унтан килет. Операционнăй сестрасене хатĕрлекен шкулсем çук, вĕсем хирургсем çумĕнче вĕренсе хатĕрленеççĕ. Пирĕн ку тĕлĕшрен те ĕç мухтанмалла мар. Вĕсем питĕ сахал, тепĕр енчен кунта çакăн пек сывă мар япала сисĕнет: кашни хирург пĕр сестрапа ĕçлеме вĕренме тăрăшать, вара хăнăхса çитет те, ытти сестрасене операци ĕçне вĕрентмест. Пирĕн шутпа, çапла туни усăллă мар, оборона интересĕсемшĕн вăл сиенлĕ те. Вăрçă вăхăтĕнче пуринчен ытла операци ĕçне пĕлекен сестрасем кирлĕ, вĕсене пирĕн мирлĕ вăхăтра хатĕрлемелле.

Юн ярса сыватас ĕç мирлĕ вăхăтра та, вăрçăра та нимĕнпе улăштарми майсем пулса тăраççĕ. Ăна алла илме те пăртак хирурги техникине пĕлес пулать.

Пирĕн шутпа. хирурги пулăшăвне республикăра çаплипех хăварма юрамасть, ăна масса патнех çитермелле, вăйлатмалла.

К. ПАЙРАШ.

Больничнăй листоксен çĕнĕ бланкисем

Апрелĕн 23-мĕшĕнче ВЦСПС сывлăха сыхлас ĕç оргăнĕсене больничнăй листоксен çĕнĕ бланкисене ярса пама тытăнать. Пуринчен малтан вĕсене Мускавпа Ленинградри медицина учрежденийĕсене ярса параççĕ.

Кивĕ бланксемпе танлаштарсан, больничнăй листоксен çĕнĕ бланкисене ятарласах çакăн пек раздел кĕртнĕ: «Социальнăй страховани совечĕ (цехри комисси) е ФЗМК йышăннă решени». Çак разделра социальнăй страховани совечĕ (цехри комисси) е фабрикăпа заводри комитет тата вырăнти комитет, Ĕçлев кĕнекисем тăрăх, çав предприятире татти-сыпписĕр миçе çул ĕçленине тата СНК СССР, ЦК ВКП(б) тата ВЦСПС 1938 çулти декабрĕн 28-мĕшĕнче йышăннă постановленипе килĕштерсе мĕн чухлĕ пособи памаллине палăртса параççĕ.

Больничнăй листоксен çĕнĕ бланкинче çавăн пекех тепĕр раздел пур, çав разделра табельщик çын чире пула миçе кун сиктерсе хăварни çинчен сведенисем парать тата ĕçе хăçан тухнине кăтартса парать. Çак сведенисене мастер, цех начальникĕ е отдел заведующийĕ алă пусса çирĕплетеççĕ.

Больничнăй листоксен çĕнĕ бланкисене пĕчĕк кĕнекесем пек туса кăлараççĕ, вĕсенче корешоклă листоксем 25-шер е 50-шар листок пулаççĕ. Çав корешоксем тăрăх врачсем больничнăй листоксем пани çинчен отчет параççĕ.

(ТАСС).

ÇУЛЛАХИ СПОРТРИ ПЫСĂК СОБЫТИ

Комсомолпа профсоюзсен массăллă кросĕсем

Кăçал çуллахи спорт сезонĕ çуркуннехи массăллă кроссемпе пуçланать, вĕсем май тата июнь уйăхĕсенче пулаççĕ. Физкультурăпа спорт ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Пĕтĕм Союзри Комитечĕн председатель заместителĕ Крячко юлташ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ:

— Пирĕн çĕршывăн кăнтăр районĕсенче физкультурниксем чупас тĕлĕшпе тренировкăсем тума пуçланă ĕнтĕ. Майăн 3-мĕшĕнче кунта комсомолецсен большевикла пичет ячĕпе ирттерекен массăллă кросĕ пуçланать. Çурçĕр енчи районсенче кроса июнĕн 1-мĕшĕнче пуçлама йышăннă. Çуркуннехи массăллă çак ăмăртусен старчĕсене миллионшар çынсем тухаççĕ. Чупса тухмалли дистанцисем тикĕс мар вырăнсем урлă тăсăлса выртаççĕ. Ăмăртусен участникĕсен çулĕ çинче тарăн канавсем, çырма-çатрасем, шывсем, сăртсем, вăрмансем тата вĕтлĕх катасем те пулаççĕ.

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ йышăннă тăрăх, колхозниксен çуркуннехи Пĕтĕм Союзри кросĕ комсомолецсен кросĕсемпе пĕрлешĕнсе каять, ăна ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ палăртса çирĕплетнĕ сроксенче ирттереççĕ. Çакă вăл комсомолецсен большевикла пичет ячĕпе ирттерекен кросĕ пулса тăрать. Çак ăмăртусене колхозри çамрăксене тата ялти çитĕннĕ çынсене мĕнле пулсан та нумайрах явăçтармалла.

Майăн 18-мĕшĕнче ССР Союзĕнчи хуласемпе районсенче профсоюзсен çуркуннехи Пĕтĕм Союзри тăххăрмĕш кросĕ пуçланать. Çак кун çуллахи спорт сезонĕ пуçланнă ятпа стадионсемпе садсенче физкультурниксен массăллă праздникĕсем тата халăх гуляннийĕсем пулаççĕ. Çакăн пек уявлă обстановкăра тĕрлĕ дистанцисене чупса тухас тĕлĕшпе ăмăртусен стартне параççĕ.

Çуркуннехи массăллă кроссен программинче — 1000 метр хушшине (арçын ачасем валли), 500 метр хушшине (хĕрачасем валли), 1000, 3000, 5000 метр хушшине (арçынсем валли), 500, 1000 тата 2000 метр хушшине (хĕрарăмсем валли) чупса тухас тĕлĕшпе ăмăртусем пулаççĕ. Çак кроссем çитес çуллахи сезонра спорт ĕçĕнчи питех те пысăк событи пулса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи физкультурниксен çарĕн речĕсене çĕнĕрен миллионшар çынсем хутшăнаççĕ.

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Пĕтĕм Союзри Комитечĕ физкультурниксен мĕнпур организацийĕсене çуркуннехи массăллă кроссене тĕплĕн хатĕрлеме тата кăтартуллăн ирттерме хушнă. Республикăсемпе облаçсенче ятарласах оргкомитетсем тăваççĕ. Ăмăртусен судейски коллегийĕсен ĕçне физкультурăн чи лайăх специалисчĕсене явăçтараççĕ. Опытлă спортсменсем практикăллă пулăшу пама вырăнсене тухса каяççĕ. Ăмăртусене хутшăнакансем пурте медосмотрта пулма тивĕçлĕ. (ТАСС).

Театр сезонĕ хупăнас умĕн

Чăвашсен Государство Академи театрĕн хĕллехи сезонĕ майăн 8-мĕшĕнче хупăнать. Майăн 8-мĕшчен хулари ĕççыннисем халь лартма пуçланă «Коварство и любовь», «Мелкие козыри» пьесăсемсĕр пуçне Сталинла преми лауреачĕ Крапива çырнă «Кто смеется последний» пьесăна кураççĕ. Вăл пьесăна майăн 1-мĕшĕнче чăвашла лартаççĕ.

Ачасен театрĕ Çĕмĕрлере

ÇĔМĔРЛЕ. Шупашкарти ачасен театрĕ Çĕмĕрлене çитрĕ. Апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа спектакльсем лартса пама пуçларĕ. Малтанхи кунсенче «Пионерская застава» тата «Овод» пьесăсене лартса пачĕç.

Театр коллективĕ спектакльсене лартма аван хатĕрленнĕ. Артистсем хăйсен ролĕсене лайăх выляса пачĕç.

Çĕмĕрлери ĕççыннисем ачасен театрне ăшшăн кĕтсе илчĕç. Спектакльсене курма пысăк хаваслăхпа çӳреççĕ. Икĕ кун хушшинче спектакльсене 1800 çын ытла пырса курнă.

А. В.

Çавал шывĕ çыранран тухнă

Апрелĕн 22-мĕшĕнче Çавал шывĕ питĕ нумай тулса çыранран тухнă. Виçпӳрт салине шыв илнĕ пирки, выльăхчĕрлĕхсене урăх çĕре куçарма тивнĕ.

Атăл çинче

Атăл шывĕ юлашки талăк хушшинче 30 сантиметр хушăннă. Шыв горизончĕ—387 сантиметр. Çанталăк уяр. Ĕнер ирхине 8 сехет тĕлне сывлăшри температура 0,5 градус ăшă пулнă.

* * *

Ĕнер кăнтăрла 10 сехет те 30 минута тĕлĕнче Атăл пăрĕ пĕрремĕш хут хускалса 200 метра яхăн юхрĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВНИМАНИЮ ГРАЖДАН!
С 28-го АПРЕЛЯ по 1-е МАЯ
СЕГО ГОДА
в ГОРОДЕ ЧЕБОКСАРАХ
НА ПЛОЩАДИ ЗЕЛЕНОГО БАЗАРА
ОТКРЫВАЕТСЯ
3-х дневный предпраздничный
БОЛЬШОЙ БАЗАР.

На базар приглашаются: колхозы, колхозники и единоличники со своими сельскохозяйственными продуктами и все торгующие организации.

Управление рынка.

2—1

ОТКРЫТ ПРИЕМ
на ЗАОЧНОЕ ОБУЧЕНИЕ
в ЧУВАШСКОМ ГОСУДАРСТВЕННОМ
ПЕДАГОГИЧЕСКОМ ИНСТИТУТЕ
НА 1941—42 УЧЕБНЫЙ ГОД.

На заочное обучение в педагогический институт принимаются граждане СССР, имеющие законченное среднее образование, без ограничения возраста.

Преимущественное право при зачислении на заочное обучение предоставляется учителям V—X классов неполных средних и средних школ.

Поступающие на заочное обучение подвергаются приемным испытаниям по следующим дисциплинам:

I. НА ФАКУЛЬТЕТ ЯЗЫКА и ЛИТЕРАТУРЫ:

по русскому языку и литературе, истории народов СССР и географии.

Кроме того, поступающие на отделение чувашского языка и литературы, подвергаются дополнительным испытаниям по чувашскому языку и литературе

II. НА ИСТОРИЧЕСКИЙ ФАКУЛЬТЕТ:

по истории народов СССР, географии, русскому языку и литературе.

III. НА ФИЗИКО-МАТЕМАТИЧЕСКИЙ ФАКУЛЬТЕТ:

по математике, физике, химии, русскому языку и литературе.

IV. НА ФАКУЛЬТЕТ ЕСТЕСТВОЗНАНИЯ:

по физике, химии, русскому языку и литературе.

Окончившие стационарный учительский институт и сдавшие государственные экзамены принимаются на III курс, с досдачей следующих дисциплин:

а) ФАКУЛЬТЕТ ЯЗЫКА и ЛИТЕРАТУРЫ: современный русский язык, теория литературы, фольклор, русская литература XIX—XX века, методика преподавания литературы.

б) ИСТОРИЧЕСКИЙ ФАКУЛЬТЕТ: история СССР от XIX века до конца курса, методика преподавания истории (в разделах, касающихся VIII—X классов), новая история (1 раздел).

в) ФАКУЛЬТЕТ ЕСТЕСТВОЗНАНИЯ: физика, химия неорганическая, анатомия и морфология растений, качественный анализ, систематика растений.

г) ФИЗИКО-МАТЕМАТИЧЕСКИЙ ФАКУЛЬТЕТ: аналитическая геометрия (в пространстве), интегральное исчисление, высшая алгебра, общая физика (раздел электричество и магнетизм), методика преподавания математики (в разделах VIII—X классах).

Прием заявлений о зачислении в состав студентов заочного отделения пединститута производится с 1 апреля по 25 июня включительно.

Заявления о приеме подаются на имя директора института с указанием избранного факультета, с приложением: а) подробной автобиографии, б) аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике) и 2 фотокарточки.

В случае отсутствия какого-либо из указанных документов, заявление не рассматривается.

ПРИМЕЧАНИЕ: если подлинник аттестата об образовании находится в РОНО, то представляется нотариально заверенная копия документа и справка РОНО о том, что подлинник документа находится в РОНО.

Лица, принятые в состав студентов заочного отделения, обязаны участвовать на установочной сессии для ознакомления с планом и содержанием самостоятельной работы.

Приемные испытания, зачисление и установочная сессия проводятся с 5 по 20 июля.

Открыт так же прием на заочное обучение
ЗА УЧИТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТ

ПО СПЕЦИАЛЬНОСТЯМ: истории, русского языка и литературы, чувашского языка и литературы, естествознания и математике.

АДРЕС ИНСТИТУТА: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

ДИРЕКЦИЯ.

ПĔЧĔК ФЕЛЬЕТОН

НИМ ÇУКРАН...

Вăл пьеса пирки чи малтан эпир Мускавра тухса тăракан «Безбожник» хаçат урлă пĕлтĕмĕр. Унта иртнĕ çулхи номерсенчен пĕринче çапла çырнăччĕ: «Чăвашсен **паллă** (!) писателĕ-драматургĕ Кузьма Чулгась «Масар ялĕсем» ятлă çĕнĕ пьеса çырса пĕтернĕ. «Масар ялĕсем» — чăваш литературинче тĕне хирĕç ыйтупа çырнă пĕрремĕш произведени».

Çак хыпара малтанах пĕртте ĕненес килмерĕ.

«Суя япала пулĕ, — терĕмĕр эпир. —Ара, Кузьма Чулгась хăйĕн «Король çухалĕ», «Хĕвел», «Хĕрлĕ хăнкăлапа хăрах ураллă таракан кăмака хыçĕнче хĕн курса çӳрени çинчен» калакан романĕсене те çырса пĕтереймен вĕт-ха», — терĕмĕр.

Анчах факт вăл — фактах иккен.

1940 çулта пĕр илемлĕ кун Кузьма Чулгаçа Атăл хĕрринче курма тӳр килчĕ.

— Эсир «Безбожник» хаçата çырăнса илетĕр-и?—ыйтрĕ вăл пиртен.

— Илетпĕр, — терĕмĕр эпир.

— Вулакалатăр-и?

— Вулакалатпăр.

— А тен эсир пысăк статьисене кăна вулатăр пуль? Унта вырăнтан пĕлтернĕ хыпарсем питĕ интереслĕ.

— Вĕсене те вулатпăр, — тетпĕр эпир.

Кузьма Чулгась савăннă пек пулчĕ. Унтан бульварпа çӳлелле утрĕ.

Таçтанах курăнать иккен сăпай та лăпкă çын! Тепри пулсан, мухтанма тытăнĕччĕ, а Кузьма Чулгась апла мар, вăл систерсе кăна хăварать...

Пилĕк-ултă кун иртсен каллех Чулгаçа тĕл пултăмăр. Хальхинче вăл Володарский урамĕпе анаталла утатчĕ.

— Илтмен-и? — терĕ вăл, пире чарса.

— Мĕн? — тетпĕр эпир.

— «Масар ялĕсене» пичете янă. «Ĕçхĕрарăмĕнче» тухать... — Унтан ахальрен кăна хушса хунă пек:—Ăслă çын журнал редакторĕ!

— Ăçтан курăнать?

— Ара, «Масар ялĕсене» пĕр сăмах каламасăрах пичете ячĕ.

Юрать. Капла пулчĕ хайхискер. Пирĕн çак пьесăна вулас килекен пулса çитрĕ. Ара, калаçаççĕ те калаçаççĕ...

Эрнене яхăн иртсен каллех Чулгаçа тĕл пулатпăр.

— Пьеса иккĕмĕш изданипе тухать. Тата тепĕр журналта пичетлеççĕ,—пĕлтерчĕ вăл кĕскен кăна.

Нумай тăратпăр-и, сахал-и — хайхи пьеса 3-мĕш изданипе уйрăм кĕнекен пичетленсе тухрĕ.*)

Пĕрремĕш хут вуласа тухнă хыççăн эпир, тӳррипех каласан, антраса кайрăмăр. Иккĕмĕш хут вуланă хыççăн тĕлĕнес килчĕ. Виççĕмĕш хут вуларăмăр та — тарăхмаллипех тарăхма пуçларăмăр. Çакă-и-ха вăл 17 пинлĕ тиражпа пичетлесе кăларнă тĕне хирĕçле пьеса? Çакă-и-ха вăл «чăваш литературинчи пĕртен-пĕр тĕне хирĕçле произведени?» Мĕн ку? Вулакансенчен мăшкăлани-и? Е ĕлĕкхи базарсенчи усламçăлла хăтланни-и?

Пăхса тухăпăр ĕнтĕ пьесине. Акă унăн содержанийĕ (ĕçĕ революциччен пулса иртет):

Ямшăк арăмĕ Пăраскав патне «таврари паллă манашка» Луккери пырса кĕрет. Пăраскавăн нумаях пулмасть Микула ятлă ывăлĕ вилнĕ иккен. Манашка курнă тĕлĕк тăрăх, Микула хăйĕн çылăхĕсемшĕн тамăка лекнĕ. Пăраскав хăраса ӳкет. Вăл мĕнле майпа та пулин ывăлне тамăкран çăлассшăн. Луккери ку ĕçе хăй çине илет (турра кĕлтуса каçарттарма). Хакĕ — иксĕр тенкĕ. Пăраскав арчинчен укçа илет те манашкăна парать.

«Акă укçи, лăпах иксĕр тенкĕ», — тет вăл.

Луккери тухса кайсанах Пăраскав патне «чее вăрă» Улангай пырса кĕрет. Ку çын хăйне «леш тĕнчерен» килтĕм, тет. Вăл масар çинче Пăраскав ывăлĕпе Микулапа юнашарах пурăнать иккен.

Улангай Микулана тамăкран хăтарса рая кĕртме кирлĕ тесе (турăсене взятка пама!), Пăраскавран пилĕксĕр тенкĕ укçа, пысăк шăрттан, кăçат, тăлăп илсе тухса каять.

Кĕçех Пăраскав упăшки Атабай ямшăкран таврăнать. Луккерипе Улангай хăйĕн арăмне улталанине пĕлсен, хуçа чăркăшма пуçлать. «Пӳртре ларнă çĕртех ухмаха ермен пуль-çке эсĕ?! — тесе ятлать вăл Пăраскава. (Пăраскав ăслă çынах пулнă иккен!).

Атабай лашисем çине ларса Улангай хыççăн хăвалать. Анчах «чее вăрă» ăна та улталать: пĕр çĕрте вăл унăн лашисене хуралласа тăма пулать те, хуçи аяккалла пăрăнсанах çуна çине ларса куçран çухалать.

Атабай пушă алăпах киле таврăнать. Юлашки сăмаха геройне хăйне парар:

«Атабай (...тăруках турăшсем çакăнса тăракан кĕтес патне пырса, сак çине хăпарса каять). Акă сана Микул турă! (Пĕр турăшне илсе арăмĕ çине ывăтать). Акă сана Гаврил турă! Акă, акă! (турăш хыççăн турăш илсе ывăтать). Акă сана Пăраскав турă! Вилсен тӳрех ун патне кай! Вăл сана рая кĕмелли хут çырса парĕ!»

Хăш планета çинчен татăлса аннă айвансем кусем? Мĕн каласшăн пулнă ку «комедире» Кузьма Чулгась? Пуянсем те турăсăра тухма пултарни çинчен-и? Е хăшпĕр чухне пуянсен «ăслă» арăмĕсем те йăнăш тума пултарни çинчен-и?

Комментари кунта кирлех мар пулĕ. «Масар ялĕсем» — литературăри брак, ку пуриншĕн те куç-кĕретĕнех курăнса тăрать.

Çакă çеç тĕлĕнтерет: **Короленко** калавĕсен сборникĕ, **Чеховăн** «Вишня сачĕ», **Çеçпĕл Мишши** çырнă сăвăсен сборникĕ пек хаклă та паха кĕнекесем Чăвашиздатра виç-тăватшар çул хушши пичетленсе тухаймасăр выртаççĕ, çав вăхăтрах «Масар ялĕсем» евĕрлĕ халтурăллă «комедисем» çиçĕмле хăвăртлăхпа пичетленсе тухаççĕ.

Мĕнрен килет-ши вăл? Чăвашиздат руководителĕсем мĕн калĕç-ши кун пирки?

ТУРАСĂРСЕМ.

---

*) Кузьма Чулгась. — **«Масар ялĕсем»**. Чăвашгосиздат, 1941 çул. Тираж 4000 экз. Редакторĕ Н. И. Юмангай.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналĕн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналĕн—0—85. издательство конторин—0—23.

НТ 2662.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР Заказ № 227. ф. 6. 58 84 п. л.